Ц. Б. им. Горького

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 АПРЕЛ 17 ВЫРСАРНИКУН

88 (4901)-мĕш №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕҫтăвкомăн хаҫачĕ ● Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĔ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редактăрăн 0—67
Ред. заместителĕн 0—88
Редакци секретарĕн 4—40
Дежурнăйăн 6—23

БОЉШЕВИКЛА ПИЧЕТШĔН ПОЛИТИКĂЛА ЕКЗАМĔН

Парти Тĕп Комитечĕ тата унăн органĕ —„Правда" хаҫат пирĕн большевикла пичете йаланах ҫул кăтартса вĕрентсе пыраҫҫĕ. Нумайах пулмасть, парти Тĕпкомĕ хаҫатсен страницисенче парти пурнăҫĕпе ĕҫĕсене сутататасси ҫинчен решени йышăнчĕ, ҫак решени тăрăх пирĕн хаҫатсем умне конкретлă задачăсем тухса тăчĕҫ. Ун хыҫҫăн вăхăт нумай та иртмерĕ, „Правда" сĕнĕрен пирĕн хаҫатсен парторгăнсен суйлавне йертсе пырас ĕҫе активлă хутшăнма кирлине кăтартса пачĕ.

Халĕ партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсем пур ҫĕрте те пуҫланчĕҫ. Иртнĕ ҫулта тунă йанăшсем кăҫал ан пулччĕр тесен, суйлава йертсе пымала. Суйлава йертсе пырас ĕҫре пирĕн большевикла пичетĕн вырăнĕ пит те пысăк. Хаҫатсен отчотпа суйлав кампанине организацилесе иртерес ĕҫре тивĕҫлĕ вырăнта пулмала. Ҫакна тума пире парти организацийĕсем, коммунисен массисем хушаҫҫĕ.

„Парторгăнсен суйлавĕсем ҫинчен большевикла ҫутатасси—вăл отчотпа суйлав пухăвĕсем политикăлă вырăнта тăнине пур йенчен те кăтартмалине, критикăпа самокритикăна йертсе пымалине, отчотпа суйлав пухăвĕсен опычĕ тăрăх партилĕ кадрсем идейăпа политикă тĕлĕшĕнчен ӳснине, большевикла организацилĕх ӳснине кăтартмалине пĕлтерет. " („Правда").

Пирĕн хаҫатсен коммунисене отчотпа суйлав вăхăтĕнче самокритикăпа анлăн сарма, троцкисла-бухаринла бандитсен йулашкисене нимĕн хăвармиччен пĕтерме конкретлăн пулăшмала. Хаҫатсен парти работникĕсене, партилĕ ĕҫĕн лайăх опытне, хуҫалăхлă - политикăлă задачăсене ăнăҫлă пурнăҫа кĕртнин опытне пĕрлештерме, парторганизацин массăсемпе тата тачăрах ҫыхăнма пулăшмала. Ҫакă ĕнтĕ партин йертсе пыракан органĕсене ҫирĕп, тĕрĕсленнĕ большевиксене, пирĕн парти ĕҫне чĕререн парăннă, халăх тăшманĕсене хирĕҫ кĕрешсе , пиҫнĕ, коммунисла парти ĕҫĕшĕн вĕҫне ҫитиччен тăма пултаракансене суйлама пулăшнине пĕлтерет.

Пирĕн хаҫатсем халĕ ҫак задачăна пурнăҫа мĕнле кĕртеҫҫĕ-ха? Тӳрех калас пулать, вĕсем ку тĕлĕшпе начар ĕҫлеҫҫĕ. Ку шута республикăри хаҫатсем те, районсенчи хаҫатсем те кĕреҫҫĕ. Ишлей районĕнчи „Колхозник хаҫачĕ", Ҫĕмĕрле районĕнчи „Социалисăмла ĕҫ", Трак районĕнчи „Колхозник" тата ытти районсенчи хаҫатсем те ку тарана ҫитсе те партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕ ҫинчен нимĕн шарламасăр лараҫҫĕ. Районти парторганизацисем, пуҫламĕш парторганизацисемпе уйрăм коммунисем суйлава мĕнле хатĕрленеҫҫĕ, мĕнле иртереҫҫĕ — ҫаксем ҫинчен хаҫатсем статйасем те, информацилĕ заметкăсем те ҫырмаҫҫĕ.

Ҫак хаҫатсем чăннипе илсен суйлав тулашĕнче тăраҫҫĕ, ăна йертсе пырассинчен пăрăнаҫҫĕ. Вĕсем партин пурнăҫĕпе ĕҫĕсене ҫутатмаҫҫĕ, уйрăм организацисен лайăх ĕҫĕсен опычĕсене кăтартмаҫҫĕ, начар ĕҫлекенсене критиклемеҫҫĕ. Ҫакă ĕнтĕ вăл пирĕн хаҫатсем отчотпа суйлав кампанийĕн задачисене ăнланса илменнинчен килет.

Парторгăнсен суйлавĕсем ҫинчен пичетлекен материалсем ҫине пит те тимлĕн, пит те ответлăн пăхмала. Парти организацисен ĕҫĕсене шăсма, арпаштарма пулăшакан материалсем пирĕн хаҫатсенче пулмала мар. Ҫапла пулин те пирĕн хаҫатсем ку ĕҫре хăйсен вичкĕнлĕхне, сыхăлăхне кăтартаймаҫҫĕ-ха. Сăмахран, партин Шупашкар хули комитечĕ пуҫламĕш организацисене, парткомсемпе парторгсем парти решенийĕсене мĕнле пурнăҫа кĕртсе пынисене тĕрĕслеме уйрăм комиҫҫисем тумала тесе йанăш шухăш панă. Шупашкар хулинчи пуҫламĕш организацисенче ҫавнашкал комиҫҫисем организациленĕ. Республикăри хаҫатсен ҫак йанăшца вăхăтра тӳрлетме пулăшмала пулнă. Анчах вĕсем ăна туман. Хула комитечĕн йанăшне тӳрлетес вырăнне, ăна сарма пулăшнă, (апрелĕн 16-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕнчи" Атлашева йулташ заметки). Пирĕн „Правда" хаҫатран вĕренмеле. Вăл пире коммунисен пухăвĕ ҫинчен, пухусенче тухса каланă коммунисен сăмахĕсене тĕплĕн шухăшласа, тĕплĕн тĕрĕслесе, парти организацисен ĕҫне лайăхлатма пулăшакан материалсене ҫеҫ пичетлеме хушать.

Пирĕн хаҫатсем—парти органĕсем. Хаҫатра пичетленĕ материалсене парти организацийĕсем, коммунисем парти комитечĕ панă рекомендаци вырăнне, канаш вырăнне хурса йышăнаҫҫĕ. Ҫакăнтан ĕнтĕ кашни редактăрăн, кашни корреспондентăн парти Тĕп Комитечĕн постановленийĕпе суйлава иртерме панă инструкцине тĕплĕн пĕлмеле. Унсăрăн пирĕн хаҫатсем ĕҫе пăтраштарма пултаракан кăтартусем пама пултараҫҫĕ. Кунашкал фактсем пур пирĕн. Ҫĕмĕрле районĕнчи „Социалисăмла ĕҫ" хаҫат партилĕ-политикăла ĕҫе организацилесе йертсе пырассипе пĕтĕмпех вулав ҫурт пуҫлăхĕсемпе йалсовет секцисен туса пымала, тесе ҫырни ҫакна лайăх ҫирĕплетет.

— Суйлав ҫинчен паракан материалсем, умстатйаран пуҫласа информацилĕ чи пĕчĕк заметкăна ҫитиччен парти организацийĕсене отчотлă суйлав пухăвĕсене идейăпа политикă тĕлĕшĕнчен ҫӳлте тăнипе иртерме пулăшмала, тет „Правда". Отчотпа суйлав пухăвĕсенче кандидатурăсене васкавлăн сӳтсе-йавма, парткомсен отчочĕсене йатшăн сӳтсе-йавма, кампание васкавлăн иртерме пăхакансене хытă критиклемеле. Самокритикăна хĕсекен, парти членĕн правине пăчăклетме хăтланакан ҫынсене хирĕҫ большевикла кĕрешмеле. Парти Тĕп Комитечĕн партин йертсе пыракан органĕсен суйлавне иртерме панă инструкцине кашни организаци, кашни руководител, кашни коммунис пурнăҫа мĕнле кĕртсе пынине хаҫатсен ҫирĕп асăрхаса тăмала. Суйлав вăхăтĕнче ҫак инструкцине пăснисем пулсан, вĕсене ҫийĕнчех тӳрлетме пулăшмала.

Парти пурнăҫне, уйрăмах отчотпа суйлав пухăвĕсем ҫинчен ҫутатнă чухне, хаҫатра усăсăр ҫаталтатма кирлĕ мар. Парти пухăвĕсенче критикăпа самокритикăна сарма пулăшас тени—вăл пухусем мĕнле иртни ҫинчен тĕрĕс ҫырмалине, вĕсене тĕрĕс хакламалине, коммунисем хăйсен комитечĕсен, парторгсен ĕҫĕсене мĕнле критикленине, мĕнле ҫитменлĕхсене палăртнине, мĕнле ыйтусем кăларса тăратнине тĕрĕс, нимĕн ӳстермесĕр ҫырмалине пĕлтерет.

Отчотпа суйлав пухăвĕсенче парти членĕсен йышлă массисем ҫĕнĕ шухăшсем, партилĕ ĕҫĕн опычĕсем ҫинчен калаҫҫĕ, ҫĕнĕ сĕнӳсем параҫҫĕ. Пирĕн ҫаксене пурне те хаҫатсенче йар уҫҫăн ҫутатмала. Ҫакă вăл пирĕн коммунисене идейăпа политикă тĕлĕшĕнчен ӳсме пулăшать.

Парторгăнсен суйлавĕ пирĕн хаҫатсемшĕн политикăла екзамĕн пулса тăрать. Анчах ҫак ĕҫре хаҫатсем хăйсен большевикла пултарулăхне кăтарччăр тесен, вĕсене парти комитечĕсен ҫине тăрса йертсе пымала. Партин хăшпĕр райкомĕсем халĕ те хăйсен хаҫачĕсем ҫине ҫавăрăнса пăхманни пур, пирĕн ҫак практикăна пĕтермеле. Райкомсен хăйсен хаҫачĕсене парти активĕнчен автăрсен коллективĕ тума, вĕсене парти пурнăҫĕ ҫинчен, отчотпа суйлавсем мĕнле иртсе пыни ҫинчен статйасем, заметкăсем ҫырма хутшăнтармала.

Хаҫатсен хăйсен те большевикла пичете тивĕҫлĕхпе ĕҫлеме тытăнмала, парти комитечĕсен вĕсене ĕҫре конкретлă пулăшмала. Ҫапла тусан ҫеҫ пирĕн хаҫатсем Ленин—Сталин партийĕ ĕҫĕшĕн большевикла ĕҫлеме пултарнине ĕҫре кăтартма пултараҫҫĕ.

Суйлав кампанийĕ Грузин тата Армйан СС Республикĕсенче

Грузин СС Республикĕн Ĕҫтăвакан Тĕп Комитечĕ апрелĕн 17-мĕшĕнче округсенчи суйлав комиҫҫисен составне пичетлесе кăларма палăртнă. Республикăри паллă ҫынсене округсенчи суйлав комиҫҫисен составне кандидатурăна ҫирĕплетме Грузинри 40 районран суйлавҫăсен пухăвĕсенчен ыйтусем килнĕ.

Тĕп Суйлав Комиҫҫи суйлав документсен формисене пăхса тухнă. Формăсене пурне те суйлавсем Аджарипе Абхази республикĕсенче пĕр вăхăтра пулса иртнине шута илсе тунă. Йиунĕн 12-мĕшĕнче вăл республикăсенчи ĕҫҫынисем пĕр вăхăтрах Грузин СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйламали, ҫавăн пекех тата хăйсен автономлă республикĕсен Верховнăй Совет депутатне суйламали кандидатсемшĕн сасăлаҫҫĕ.

Армйан СС Республикĕнче суйлав кампанийĕ кунран кунах анлăн сарăлса пырать.

Суйлавҫăсен нумай ҫынлă пухăвĕсем пулса иртнĕ хыпарсем чи инҫетри сăрт-тулă районсенчен килеҫҫĕ.

Порадузск суйлав округĕн № 206 суйлав комиҫҫине паллă колхозницăна—ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутатне Карапетйан йулташа суйланă. Унăн кандидатурине округри суйлав комиҫҫине суйлама хăйĕн тăван колхозĕнчи колхозниксемпе колхозницăсен пухăвĕ пĕр шухăшпа тăратнă.

Пĕтĕмпе тĕрлĕ районсенче округри суйлав комиҫҫисене ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕсене 6 ҫынна суйланă та ĕнтĕ.

(ТАСС).

Йĕтĕн-долгунец тухăҫне ӳстермели тата сӳспе вăрлăх пахалăхне лайăхлатмали майсем ҫинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Йĕтĕн-долгунец тухăҫне ӳстермели тата сӳспе вăрлăх пахалăхне лайăхлатмали ĕҫсем ҫинчен" 1938 ҫ. апрелĕн 3-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫапла йышăнать:

I. Вăрлăх тăвас ĕҫе лайăхлатас тĕлĕшпе:

1. 1938 ҫулта суртлă вăрлăх акмали лаптăка 2 пин гектар ҫирĕплетсе районсем тăрăх ҫапла валеҫсе парас:

1) Улатăр районне 350 гектар;
2) Вăрнар —„— 250 —„—
3) Кувакинă —„— 450 —„—
4) Пăрачкав —„— 550 —„—
5) Ҫĕмĕрле —„— 400 —„—

Чăваш АССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне тата райĕҫтăвкомсене суртлă вăрлăх акмали плана пĕтĕмпех тултарса 1940 ҫулта пĕтĕмпех суртлă вăрлăхпа акмала тума хушас.

2. Йĕтĕн акса тăвакан колхозсенче пуринче те йĕтĕн татма тухиччен 10—15 кун малтан йĕтĕн-долгунец вăрлăх участкисем уйăрса хумала тăвас.

3. Йĕтĕн-долгунец вăрлăх участкисен валли 1938 ҫулта 1,5 пин гектар хăварса районсен тăрăх ҫапла валеҫсе парас:

1) Улатăр районне 260 гектар;
2) Вăрнар —„— 190 —„—
3) Кувакинă —„— 340 —„—
4) Пăрачкав —„— 410 —„—
5) Ҫĕмĕрле —„— 300 —„—

4. Колхозсенчи вăрлăх участкисем ҫинчен илнĕ йĕтĕн вăрлăхне акас ĕҫе йанисĕр пуҫне урăх ҫĕре йама чарас. Ҫав йĕркене пăсакансене уголовлă йĕркепе айăпламала тăвас.

II. Организацилĕ тата агротехникăла ĕҫсем йенĕпе

5. Чăваш АССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне тата райĕҫтăвкомсене йĕтĕн акса тăвакан колхозсĕнчи малтанхи черетрех клевĕрпе тимофейĕвкă хутăшне пĕр уй акмали пусуҫавăрнăшсем туса пама хушас. Пусуҫавăрнăшре курăксене икĕ ҫул хушши ҫулмала пултăр. Йĕтĕн акма пĕр уйран ытла мар уйăрса памала.

6. Йĕтĕн акса тăвакан колхозсенче сахалтан та ҫакăн пек агротехникăла ĕҫсене туса иртермеле тăвас.

а) 1939 ҫултан пуҫласа йĕтĕне ҫуркунне ҫеҫ сухалана вырăна акма чарас, колхоз председателĕсене, МТС директăрĕсене тата ҫĕрĕҫ органĕсене йĕтĕн акмали пĕтĕм лаптăка ҫулленех предплужниклă плугсемпе кĕрсухи туса хăварма хушас;

б) йĕтĕн калчисене йаланах ҫумкурăксенчен таса тытса тăмала, ҫумкурăксем тухнă май ҫумласах тăмала, икĕ хутран кайа мар пĕтĕм лаптăкĕпех ҫумкурăксене ҫумласа тасатмала;

в) йĕтĕн-долгунецран сӳс тумали пайне тата вăрлăх участки ҫинчи йĕтĕне иртерех, саралса ҫитсен татмала;

г) 1938 ҫулта колхозсене йĕтĕне ваљоксемпе ҫапса тĕшлеме чарас. Йĕтĕн ҫапас ĕҫе йĕтĕн ҫапмали молотилкăсемпе туса иртермеле йе тура витĕр кăларса йĕтĕн пуҫĕсене уйăрса илмеле;

д) йĕтĕн ҫурăмĕсене сарас тата хутса кăларас ĕҫсене август уйăхĕнче туса иртермеле; клевĕр уйне йе йĕтĕн акмали урăх уйа сарса пултарма чарас.

7. Чăваш АССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне, МТС директăрĕсене, райҫĕрĕҫ пайĕсене тата колхоз председателĕсене йĕтĕн ҫейалкисемпе лайăх усă курма тата 1938 ҫулта кашни ҫейалкă пуҫне пĕр ҫезонра 40 гектартан кайа мар акмала тума хушас.

8. Чăваш АССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне ССР Сойузĕн Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариачĕ йĕтĕн-долгунец пирки тунă агротехникă прависене май, йĕтĕн акакан кашни райова, районра—йĕтĕн акса тăвакан кашни колхоза агротехникă кăтартăвĕсем пама хушас.

9. Бригадăсенче пилĕкшер-ҫичшер ҫынлă звеносем организацилессине практикăна анлăн кĕртес, ҫав звеносем ҫумне йĕтĕн акнă участкăсене ҫирĕплетсе тата ҫирĕплетсе панă участкăсенче пур ĕҫсене те—йĕтĕн акмали участкăсене хатĕрлессинчен пуҫласа йĕтĕн продукцине ĕҫлесе туса парса татиччен звеносем ҫине хумала.

Колхоз правленисене звенйевойсене тата звено членесене ҫакăн пек йĕркепе премишутласа пама сĕнес:

а) колхоз контрактаци тăрăх тылламан сӳс тата вăрлăх пама палăртнă плана ытлашшипех тултарнă звенйевойсене, вĕсем ĕҫлесе илнĕ ĕҫкунĕсемсĕр пуҫне, звено пысăкăшне тата вăл плана мĕнле тултарнине кура 20—30 ĕҫкунĕ хушса шутласа памала;

б) колхоз йĕтĕн продуктишĕн преми-надбавкă илнĕ чух ҫурри (50 проц.) пĕтĕм колхоз аллине йулать, тепĕр ҫурри (50 процент) звено планне ытлашшипех тултарнă звеносен членĕсем хушшинче валеҫенет.

10. Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне йĕтĕн-долгунец акакан ҫĕре ҫемĕҫтерме 1938 ҫулта 18 процент тата 1939 ҫулта 40 процент минераллă удобренисем тупса пама хушас.

Чăваш АССР Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссариатне 1938 ҫулта Ҫĕмĕрле районĕнче—Ҫĕмĕрле станцинче, Йĕпреҫ районĕнче—Йĕпреҫ станцинче 1000 тоннă кĕмелĕх минераллă удобренисен склачĕсене тума хушас.

Совет органĕсен задачи—колхозниксен тата колхозницăсен пĕтĕм массине пысăк тухăҫлă, пысăк пахалăхлă йĕтĕншĕн, йĕтĕн вăрришĕн кĕрешĕве хутшăнтармала, ҫавна май каҫалах пысăк тухăҫлă йĕтĕн туса илес ĕҫре татăкла улшăну тумала, йĕтĕн сӳсĕн тата йĕтĕн-долгунец вăррин пахалăхне ӳстермеле.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ
Ф. Матвейĕв.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕҫĕсене пăхаканĕ
Н. Жукăв.

Шупашкар хули, 1938 ҫулти апрелĕн 10-мĕшĕ.

УКЕРЧĔК ҪИНЧЕ: Китайри ҫаран пĕр чаҫĕн броњăла пуйăсĕ. (Сойузфото).

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ларăвĕнче

Апрелĕн 14-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн черетлĕ ларăвĕ пулса иртнĕ, ларăва Молăтăв йулташ йертсе пынă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ пĕрремĕш квартăл планне пурнăҫа кĕртсе пырас тĕлĕшпе промышлĕннăҫ ĕҫĕн итогĕсем ҫинчен ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫумĕнчи Государствă План Комиҫҫи председателĕн Вознесенский йулташăн докладне итленĕ.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ промышлĕннăҫ халăх комиссариачĕсем, Апат-ҫимĕҫ Халăх Комиссариачĕсĕр пуҫне, пĕрремĕш квартăлти производствăлă плана пурнăҫа кĕртменнине паллă тунă. Промышлĕннăҫ пĕрремĕш квартăлти производствăлă плана 92 процент кăна тултарнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Апат-ҫимĕҫ промышлĕннăҫ Халăх Комиссариачĕ квартăл планне ирттерсе пурнăҫа кĕртнине палăртнă. Апат-ҫимĕҫ промышлĕннăҫ Халăх Комиссариачĕ 1938 ҫулти пĕрремĕш квартăл планне 106,6 процент тултарнă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ иртнĕ ҫулхи ҫак уйăхсемпе танлаштарсан промышлĕннăҫ продукцийĕ туса кăларас хăвăртлăхсем уйăхран уйăхах ӳссе пынине палăртна. Пĕтĕм промышлĕннăҫ тăрăх илсен, 1938 ҫулхи йанварте продукцин ӳсĕмĕ, 1937 ҫулхи йанвар уйăхĕпе танлаштарсан, 5,6 процент ытла шутланнă, феврал уйăхĕнче—9 процент, март уйăхĕнче—12 процент чухлĕ.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ государствăн 1938 ҫулхи выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели планĕ ҫинчен ССР Сойузĕн Ҫĕрĕҫ Халăх Комиссарĕн Ейхе йулташăн докладне тата ССР Сойузĕн Государствă План Комиҫҫи председателĕн Вознесенский йулташăн содокладне итленĕ.

1934 ҫултан пуҫласа ҫĕршывра выљăх-чĕрлĕх ĕрчетесси хăпарса пырать.

Ҫак ҫулсенче колхозлă хресченсем выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ҫĕрте пысăк ҫитĕнӳсем турĕҫ. Майракалă шултăра выљăхсен хисепĕ 1934 ҫултан пуҫласа 1937 ҫула ҫитиччен 52 процент ӳснĕ, сурăхсемпе качакасен шучĕ—81 процент ӳснĕ. Сыснасем—123 процент чухлĕ. Колхозсенчен 90 процентĕнчен ытларахăшĕнче выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели таварлă фермăсем пур. Колхозсенчи таварлă фермăсенче майракалă шултăра выљăх шучĕ 78 процент ӳснĕ, сурăхсен хисепĕ—122 процент, сыснасен—125 процент, лашасен—29 процент ӳснĕ. Таварлă фермăсем ҫĕршыва выљăх-чĕрлĕх продукцийĕ ҫителĕклĕ парса тăрас тĕлĕшпе паха ҫăлкуҫĕ пулса тăчĕҫ.

Колхозниксен килĕнчи выљăхсем те чылайах хутшăннă. Колхозсем хуҫалăх йенчен ҫирĕпленсе пынипе тата государствă колхозниксене совхозсемпе колхоз фермисенчен кивҫенле выљăхсем сутса анлăн пулăшса пынипе колхозниксем хушшинче тĕпрен илсен, ĕнесĕр хуҫалăхсем ҫукпа пĕрех. 1934 ҫултан пуҫласа 1937 ҫула ҫитиччен колхозниксем совхозсемпе колхоз фермисенчен тына пăрусем 5.5000 пин пуҫ, сысна ҫурисем—15 мĕлйун пуҫ, сурăхсемпе вĕсен путеккисене—4 мĕлйун пуҫ илнĕ. Выљăхсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе те пысăк ĕҫ туса иртернĕ. ПСК(б)П Тĕпкомĕн 1934 ҫулхи ийуњри Пленумĕн решенийĕсем тăрăх ăратлă выљăхсем усракан совхозсем пурĕ 109 тата ăратлă выљăхсем усракан хуҫалăхсем 103 тунă. Колхозсем совхозсенчен, государствăн ăратлă выљăхсем усракан хуҫалăхсемпе ăратлă выљăх фермисенчен ăратлă вакăрсем, тына парусем, сыснасем, сурăхсем тата лашасем нумай илнĕ. Ҫапла туни вăл пур тĕслĕ выљăхсене те анлăнах метизаци тума май пачĕ. 1937 ҫулта колхозсенче ăратлă аҫа выљăхсемпе ĕнесем 82 процент, сурăхсемпе качакасене 85 процент тата сыснасене 91 процент чуптарнă.

Колхозри хресченсем выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕҫре пысăк ҫитĕнӳсем тунине 1938 ҫулхи йанварĕн 1-мĕшне выљăх-чĕрлĕхсене ҫырса тухни те лайăх кăтартса парать. Ҫырса тухнă цифрăсем ҫакна кăтартса параҫҫĕ: 1937 ҫулта выљăхсен хисепĕ ҫакăн чухлĕ ӳснĕ: колхозсенче майракалă шултăра выљăхсем тăрăх—2,1 процент.

сурăхсем йенĕпе—21,2 процент,
качакасем йенĕпе —17,5 процент,
сыснасем йенĕпе—48,5 процент.

Йединоличниксем усракан выљăхсем те хутшăннă.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе совхозсем те чылай пысăк ҫитĕнӳсем тунă. Вĕсем колхозсенчи выљăхсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк вырăн йышăннă.

Анчах, ҫĕрĕҫ органĕсемпе вырăнти партипе совет организацисем ҫителĕксĕр ĕҫлесе пынипе, ҫавăн пекех тата халăх тăшманĕсем сăтăрла ĕҫ туса пынă пирки, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ҫĕрте партипе правителствă лартнă чылай задачăсене пурнăҫа кĕртмен.

Чи кайа йулса пыракан участкă вăл—лашасем ĕрчетес ĕҫ пулса тăрать.

Выљăх апачĕсен никĕсĕ те йулса пырать; ҫĕршывăн утă ҫулса илмелли тата выљăхсем ҫӳретмели вырăнсем темĕн чухлех пур, анчах та вĕсемпе пачах начар усă кураҫҫĕ.

Выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели таварлă фермăсене пур колхозсенче те туман, хăшпĕр колхозсенче фермăсем ытла та пĕчĕккĕ.

Выљăхсене ветеринарипе зоотехникăла пулăшу парас ĕҫе халĕ те йĕркене кĕртсе ҫитермен.

1938 ҫулта выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмелипе выљăхсене метизаци тумали государствă планĕн пройекчĕ тăрăх малашне выљăхсен хисепĕ чылай ӳсмеле тата совхозсемпе колхозсенче, колхозник килĕсенче ҫамрăк выљăхсем ӳстерес тĕлĕшпе задани пулать, ҫавăн пекех выљăхсене лайăхлатас тĕлĕшпе те чылай ĕҫсем тумала.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 ҫулта государствăн выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели планне йышăннă.

Малала Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Машиностройени Халăх Комиссариачĕпе Оборонă Халăх Комиссариачĕн хăшпĕр савăчĕсен строителстви валљи ҫĕрсем уйăрса парас тĕлĕшпе Курск облĕҫтăвкомĕ саккуна пăсса ĕҫленине пăхса тухнă.

Курск облĕҫтăвкомĕ ҫав савăтсен строителствине ҫĕр участкисем уйăрса панă чухне колхоз ҫĕрĕнчен 568 гектар саккунсăр илсе уйăрса панă. Кунсăр пуҫне вăл 500 колхозник килне урăх вырăна куҫарма палăртнă. Ҫапла тунипе совет государствин тĕп саккунĕсенчен пĕрине—правителствă ҫирĕплетнĕ йалхуҫалăх ертелĕн уставне пысăккăн пăснă.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫав савăтсен строителствине валљи ҫĕрсем уйăрса панине саккуна пăсса тунă тесе шутласа, Курск облĕҫтăвкомĕн ҫак ĕҫсем тăрăх йышăннă распорйаженийĕсене пурне те пăрахăҫа кăларнă. Курск облĕҫтăвком председателĕн заместителне Волынский йулташа хытă йатланă.

ССР Сойузĕн Прокуратурине ҫак ĕҫе тĕплĕн тĕрĕслесе, колхоз ҫĕрне тĕрĕс мар уйăрса илес ĕҫре айăплă пулнисене суда пама хушнă.

Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ҫав ҫӳлте асăннă саватсен строителствине валљи колхоз ҫĕрĕсен шучĕпе мар, хула тата ĕлĕк совхоз ҫĕрĕсем пулнисенчен уйăрса памала, тесе йышăннă.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Тĕплĕн критиклерĕç

ШУПАШКАР. Садвинтрестри парторганизацин очотпа суйлав пухăвĕ каланă вăхăтра усăлчĕ. Пухăва пур коммунистсем те пынă. Ытти парторганизацинчи пухусемпе танлаштарсан ку пуху уйрăмах паларса тăрать. Тӳрех калас пулать, кунти коммунистсем нумай калаçса вăхăта иртермеççĕ. Вăл чăнах та çапла иккенне çак отчотпа суйлав пухăвĕ питĕ аван кăтартса пачĕ. Парторг Маркин йулташ хăйĕн отчотĕнче парти организаци ĕçĕнчи ситменлĕхсене палăртса, ситменлĕхсем çинчен те усçăн та татăклă каларĕ. Садвинтрестри парторганизаци сахал йышлă. Парти членĕсем виççĕ, кандидатсем виççĕ, сочувствуйушчисем тăватă çын. Парторганизаци ССР Союзĕн Верховнăй Совет суйлавĕ вăхăтĕнче пысăк ĕç туса иртернĕ. Кашни коммунисах суйлав участкинчи комиссисен членĕ йе председателĕ пулса ĕçленĕ, халăх хушшинче политикăла агитацине организациленĕ. Ку ĕçре уйрăмăнах Назаров тата Кустов йулташсем лайăх ĕçлесе пычĕç. Çакăнпа пĕрлех ака, Логинов йулташ пана поручение тивĕçлипе пурнăçласа пымарĕ.

Ку парторганизацинчи коммунистсем нумай вĕреннĕ çынсем мар. Йалти шкулсенчен ытла ниçтах та вĕренеймен. Çавăнпа та коммунистсене вĕрентсе çитĕнтерсе пырасси уйрăмахах тĕп вырăнта тăмала. Кашни коммунис Ленин—Сталин вĕрентĕвĕпе хĕçпăшалланса, халăха та ăнлантарса паракан пулмала.

Коммунистсене вĕрентме кунта политграмотăран пуçланă. Малтанах политграмотăна вĕрентнĕ, халĕ парти историпе ленинисăма вĕренеççĕ. Вĕренӳре коммунистсем ӳссе пыни курăнать. Ака, Кустов, Логинов, Андрейев йулташсем пĕр çулталăк кайала политикăна начар ăнланнă пулсан, вĕсен пĕлӳлĕхĕ куллен-кун хăпарса пырать. Халь вĕсем хăйсем агитаторсем пулса ĕçлеме пултараççĕ.

Садвинтрестри парторганизаци ĕçĕнчи тĕп ситменлĕх вăл—парти ретне çĕнĕрен çынсем илес тĕлĕшпе начар ĕçлесе пыни. Кунта халь тăватă сочувствуйушчи. Вĕсенчен иккĕшĕ сочувствуйушчине 1936 ç. кĕнĕ, анчах парторганизаци пулăшман пирки, çак йулташсем халĕ те парти кандидатне куçаймасăр тăраççĕ. Совхозра ĕçлекен стахановецсемпе комсомолецсем хушшинчен партине кĕрес текенсем пур. Анчах вĕсене рекомендаци парас тĕлĕшпе хашпĕр коммунистсем пĕр сăлтавсăрах турткаланса тăраççĕ.

Парти ретне çĕнĕрен илес тĕлĕшпе парторг Маркин йулташ та питĕ тĕрĕс мар шухăшлать, вăл совхозра ĕçлекен рабочисене тĕплĕн пĕлмест.

Пренире тухса каласакан коммунистсем парторг Маркин йулташ рабочисем хушшинче пулса, вĕсене сăнаса вĕренсе пыманни çинчен каларĕç.

—Маркин йулташ кабинетра ларма йуратать,—теççĕ вĕсем.

Парторганизаци рабочисем хушшинче политикăлă воспитанилĕ ĕçе организацилес тĕлĕшпе ĕç планĕ тунă. Анчах çак план мĕнле пурнăçланса пыни çинчен парторг хăйĕн отчотĕнче каласа параймарĕ. Парти пухăвĕ йышăннă решенисене уйрăм коммунистсем мĕнле пурнăçласа пынине тĕрĕслесси те начар. Краснайа Ольга йулташа Варçăла турасăрсен йачейки организацилеме хушса хăварнă пулнă, анчах çак поручение Краснайа йулташ мĕнле пурнăçланине никам та тĕрĕслемен, ăна ĕçре пулăшман. Çавăнпа та ĕнтĕ Варçăлă турасăрсен йачейки пайан кун та пулсан çук, членĕсем те саланса пĕтнĕ. Логинов йулташа халăх хушшинче политикăла агитацине организацилеме хушнă, анчах вăл та çителĕклĕ ĕçлемест-ха.

ПСК(б)Парти хула комитечĕ парторганизацине çителĕклĕ пулăшса пыман. Пĕлтĕрхи çентабĕр уйăхĕнчен пуçласа, пайанхи куна çитиччен пĕр инструктăр та парторганизацинче пулман. Ĕçри çитменлĕхсене палăртса, вĕсене пĕтерме пулăшман. Парторганизаци пухусене хатĕрленсе иртермест. Пуху кун йĕрки çинчен ик виçĕ кун малтан пĕлтерсе хумала. Анчах кунта пуху пулас кун кăна пĕлтереççĕ.

Парти организацинчи тепĕр пысăк çитменлĕх вăл - партирен тĕрĕс мар кăларнă çынсене парти ретне кайала илнĕренпе вĕсемпе ĕçлесе пыманни. Ака, Краснайа Ольгăна елеклĕ жалăбă тăрăх парти ретĕнчен кăларнă пулнă. Ăна, парти ретне кайала илнĕ. Унпа уйрăмах ĕçлесе пымала. Анчах парторганизаци çавна манса кайнă. Краснайа йулташ хăйне халĕ те пулсан çын елекĕ тăрăх партирен тĕрĕс мар кăларнăшăн кӳренсе, йутшăнса тăрать. „Епĕ партирен каларичченех тăрăшса ĕçлесе пыраттăм, партирен кăларнăранпа манăн ĕçлес хаваслăх та пĕтсе ларчĕ. Партирен тĕрĕс мар кăларни мана питĕ кӳрентерет,"—тет Краснайа йулташ. Анчах парторганизаци Краснайа йулташăн çав тĕрĕс мар шухăшне сирсе йарса, ăна партилĕ ĕçе çителĕклĕ йавăçтарман. Ку ĕнтĕ вăл—парторганизаци те, парторг Маркин йулташ та ПСК(б) Партин йанварти пленумĕн решенине çителĕклĕ ăнланса илсе, унта кăтартнисене пурнăçламанни çинчен калать. Ку çитменлĕхе хăвăртрах пĕтермеле тесе пуху хыттăн каласа хăварчĕ.

Пуху парторганизацинчи çитменлĕхсене палăртса, малашне мĕнле ĕçлесе пымали çинчен кăтартусем парса хăварчĕ. Çĕнĕрен суйланă парторг Маркин йулташăн çавсене ĕçре большевикла пурнăçласа пымала.

Н. Косойкин.

ПСК(б)П райком отчотне итлерĕç

Апрелĕн 14-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи МТС-ри пуçламĕш парторганизаци отчотпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухăва пур коммунистсем те пынă. Çак пухурах ПСК(б) Парти Шупашкар райкомĕн отчотне те итленĕ. Парти райкомĕн отчотне итленĕ хыççăн пренире тухса каланă коммунистсем пурте райком ĕçĕнче ак çакăн пек ситменлĕхсем пуррине палартрĕç:—ПСК(б)П райкомĕ район руководителĕсен ĕçне вăхăтра кирлĕ пек тĕрĕслесе пымаст, ĕçре пулнă ситменлĕхсене, йĕркесĕрлĕхсене çийĕнчех палăртса, коммунис-руководительсем пирки мерă йышăнман. Çитменлĕхсемпе йĕркесĕрлĕхсене вăхăтра, тарăна кайиччен, пĕтермени нумай чухне ĕçе пĕтĕмпех йухăнтарса йарасси патне илсе пынă. МТС директорĕ Шчетинин парти райкомне пĕрмайах илемлĕ сăмахсемпе йăпатса. Хăйне шантарса пынă.—„Ĕпĕ çакна тăватăп та, кăна тăватăп",—тесе мухтаннă. Анчах ĕçре йăлтах урăхла, тепĕр майла пулнă.

Парти райкомĕ МТС мĕнле ĕçлесе пынине сăнаса, тĕрĕслесе пыман. Пĕлтĕр çу кăçса та райкомра ĕçлекенсем никам та пырса курман.

Партилĕ политикăла ĕçе тивĕçлипе организацилесе йарас тĕлĕшпе те райком çителĕклĕ ĕçлесе пымаст-ха. Çавăн пекех парторгсемпе ĕçлесси çинчен те манса кайнă. Колхозсенче стена хаçачĕсем вăхăтран вăхăта кăна тухкаласа тăраççĕ, вĕсен пахалăхĕ те начар. Районри хаçат редакцийĕ стена хаçат редакторĕсене пулăшса, вĕрентсе пымаст. Анчах парти райкомĕ районри хаçат редакци отчотне итлемен, ку тарана çитсе те стена хаçачĕсене ĕçлесе пырас пирки кăтарту паман.

Вырăнти пуçламĕш парторганизацисенче коммунистсене большевикла воспитани парас ĕçе мĕнле организациленине тĕрĕслемен, кирлĕ пулăшу паман. Районри учрежденисенче ĕçлекенсем çинчен те райком тĕплĕн пĕлмест. Уйрăмăн илсен МТС-ра ĕçлекенсем хушшинче бюрократла ĕçлени, контроль çукки, хăйсене пысăка хурса çӳресси курăнать. Анчах парти райкомĕ ун çинчен пĕлмест, пуçламĕш парторганизаци те çав йĕркесĕрлĕхсем çинчен систермен тăрать.

Йалхуçалăх ĕçĕнчи специалистсем мĕнле ĕçлесе пынине тĕрĕслесе пыни çук. Агротехникăна пурнăçласа вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе чылай агрономсем начар ĕçлеççĕ, тăрашни сахал курăнать.

Колхозсенче ĕçлеме МТС-па договор тумасăр машинăна ĕçлесе парăнса тăракан коммунистсем пирки нимĕнле татăклă мерăсем те йышăнман. Кăçал, парти райкомĕн ку ĕç çине уйрăмах çапăрса пахмала.

Пренире тухса каласакансем парти райкомĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, вĕсене хăвăртрах пĕтерме кăтартусем парса хăварчĕç.

Р. Малютин.

Кружоксенче

ЕЛĔК. Парти историне вĕренмелли Потребсоюз çуменчи кружок декабĕр уйăхĕнче ĕçлеме тытăннă. Ку кружока парти райкомĕн инструкторĕ Нилов йулташ йертсе пырать. Малтанхи вăхăтра 8 çын вĕренчĕç, йулашки вăхăтра 16 çына çитрĕ.

Пайанхи куна çитиччен пурĕ 13 занйати туса иртернĕ. Халĕ 6-мĕш темăна вĕренеççĕ. Занйатисем хĕрӳлĕ иртеççĕ. Кружока халĕ кăна комсомолтан парти кандидатне куçарнă Киселёв, парти кандидатĕнчен парти членне куçарнă Васильёв, Кириков, Архипов, Комзаков тата Волзникова комсомолецсем пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ, вĕсем „хорошо" паллăсемпе вĕренсе пыраççĕ. Фадейева йулташ ытти кружок членĕсем 3-мĕш темăна вĕреннĕ чухне кăна вĕренме тытăнчĕ пулин те, халĕ иттисене вĕренсе çитрĕ, „хорошо" паллăсемпе вĕренет.

Вас. Йефремов.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Самарти (халĕ Куйбышĕв хули) çурт. Унта 1889—1893 çулсенче В. И. Ленин пурăннă.

(Союзфото).

Хаçатсене пăхса тухни

Политикăла пурнăçран кайа йулмала мар

Парти Тĕпкомĕ пирĕн хаçатсене парти пурнăçĕпе ĕçĕсене тĕплĕн çутатма хушать. Ку ыйту тăрăх Тĕп Комитет нумай пулмасть решени йышăнчĕ. ПСК(б)П Тĕпкомĕн решенине пурнăçа кĕртесси кашни хаçатăн, çав шутрах районти хаçатсен хисеплĕ задачи пулса тăрать. Хаçатсен хăйсен страницисенче парти пурнăçне пур йенчен те куллĕн çутатса пымала. Ку вăл хаçатсене парти организацисемпе кашни уйрăм коммунистпа тачă çыхăнтарать.

Анчах Ишлей районĕнчи „Колхозник хаçачĕ" çак тĕп задачăна пурнăçа кĕртессишĕн нимĕн те тăрăшмасть. Унăн 1938 çулта тухнă номерĕсене пăхса тухсан, парти пурнăçĕ, парти организацисен ĕçĕ çинчен çырнисене сайра хутра çеç курма пулать. Февралĕн 10--20-мĕшĕсенче çырнă икĕ умстатйасăр пуçне, парти организацисен пурнăçĕпе ĕçĕсене çутатакан материалсене урăх тупса вулама çук. Хаçат темĕн çинчен те çырать, анчах парти пурнăçĕ çинчен çырма редакцин хăйулăх çитмест пулас.

Сăлтавĕ мĕнре? Ку ыйтăва та хаçат хăйĕн ĕçĕпе ответлет. Парти пурнăçне лайăх çутатас пулсан, хаçатăн парти активĕнчен: парторгсенчен, пропагандиссенчен, агитаторсенчен автăрсен коллективĕ пулмала. Хаçатăн хăйĕн активĕ пултăр тесен, коммунистсемпе, парторганизацисемпе тачă çыхăнмала, вĕсене хаçат ĕçне хутшăнтарма пĕлмеле. Ку çăмăл ĕç мар, автăрсен коллективне пухса çирĕплетес пулсан, вăй нумай хумала. Анчах, „Колхозник хаçачĕн" редакцийĕ, унăн редакторĕ А. И. Йенисейĕв йулташ çак, çине тăрса тумали ĕçрен пăрăнать, Тĕпком решенине пурнăçа кĕртмест. Тĕпком решенийĕ хыççăн та, „Правда" умстатйи хыççăн та „Колхозник хаçачĕ" парти организацисен пурнăçĕпе ĕçĕсене çутатма тытăнманни редактăр Йенисейĕв йулташ хăйĕн ĕçĕ çине нимĕн ответсăр пăхнине кăтартать.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй совечĕсен суйлавĕсене хĕрсе хатĕрленмеле. Ку ĕçре хаçатсен вырăнĕ питĕ пысăк. Вĕсен суйлавçăсене суйлава пур йенчен те хатĕрленсе çитме пулăшмала. РСФСР Конституцине, ЧАССР Конституцине, суйлав Положенисене вĕренекен кружоксен лайăх опычĕсене кăтартмала, начар ĕçлекенсене критиклемеле. „Колхозник хаçачĕ" çакна та хăйĕн ĕçĕ тесе шутламасть пулас. Вăл суйлава хатĕрленес ĕçрен айакра тăрать. Мартăн 26-мĕшĕнче суйлава хатĕрленесси çинчен умстатйа, Мăналра, Мускаринкассинче суйлав Положенисене вĕренме кружок организациленни çинчен çырнă та, ĕç пĕтнĕ, тесе шутланă. Унтан малтан та, унтан кайран та суйлава хатĕрленесси çинчен пĕр йĕрке те çырман. Пĕтĕм халăх суйлава хатĕрленнĕ вăхăтра хаçат çак ĕçрен айакра тăнине политикăла тимсĕрлĕх тенисĕр пуçне урăхла калама сăмах тупаймăн.

Ыйту тухса тăрать: партин Ишлей райкомĕ çакна пĕлет-ши, курать-ши? Курать те, пĕлет те! Анчах райком хăйĕн хаçачĕн ĕçĕпе интересленмест, ăна йертсе пымасть, ĕçре пулăшмасть. Çавăнпа та ĕнтĕ „Колхозник хаçачĕ" пысăк та ответлă ĕç айаккинче тăрать, хаçат пурнăçран кайа йулса пырать. Ку вăл большевикла хаçата тивĕçлĕ йапала мар. Хаçат ĕçĕнчи çак çитменлĕхсем хаçата парти райкомĕ йĕнчен йертсе пырассине татăклăнах вайлатма хушаççĕ.

Майăн 1-мĕшне çĕнĕ çĕнтерӳсемпе кĕтсе илер

Ăмăрту саралса пырать

ÇЕМĔРЛЕ. „Большевик" савăтри рабочисемпе стахановецсем майăн 1-мĕшне хатĕрленсе ăмăртăва сарсах пыраççĕ. Уйăх йачĕпе кашни бригадă социалисăмла ăмăртăва тухрĕ, вĕсем кашнийĕх хăйсем çине татăклă обйазателствăсем илчĕç.

Малта пыракан виççĕмĕш бригадă (маçтăрĕ Стоцкий йулташ) апрелĕн 13-мĕшĕнче нормăна 117,6 процент тултарчĕ. Ытти бригадăсем те вăл бригадăпа танлашасшăн кĕрешеççĕ.

Уйава хатĕрленес ĕç посолăкри суртсенче, клубра та саралсах пырать. Йатарласа уйăрнă çынсем лозунгсем, плакатсем çыраççĕ, макетсем тăваççĕ.

Иваницкий.

Çменă хыççăн

Гудок пулнă хыççăн станоксем пурте пĕр харăссăн ĕçлеме чарăнчĕç. Рабочисем хăйсен станокĕсене тасатрĕç те, кам мĕн чухлĕ ĕçленине кăтартакан хăма патне пырса, хăйсен ĕçĕсене тĕрĕслеме тытăнчĕç.

Хăма çине кашни станочник нормăна мĕнле тултарни çинчен çырнă. Морозова йулташ 21 тӳк турпас туса кăларнă, вăл 123 процент пулать. Малышева йулташ нормăна 142 процент тултарнă. И. Мокейева 15 тӳк турпас кăларас выранне 20 тӳк кăларнă. Е. Максимова йулташ 33 тӳк турпас кăлареа, нормăна 158 процент тултарнă.

М. Воробйова йулташ сменинчи стахановкăсем нормăна М. Степанова 135 процент, В. Степанова 120 процент, М. Андрейева 130 процент, М. Дйукина 115 процент тултарнă.

Вĕсем пайан çеç мар, кашни кунах çавăн пек ĕçлеççĕ. Çавна пула йулашки вăхăтра Липăвкари Ленин йачĕпе тăракан ертел (Турхан р.) лайăх ĕçлеме тытăнчĕ. Ĕç ертел руководствинче çĕнĕ çынсем ĕçлеме пуçласан лайăхланчĕ. Çĕнĕ правлени ертелти çитменлĕхсене пĕтерчĕ. Рабочисем вальли ĕçлеме лайăх условисем туса парассишĕн тăрăшать. Çавăнпа рабочисен хастарлăхĕ ӳсрĕ. Ертел 1-мĕш квартăл планне 128 процент тултарчĕ.

Ертелти рабочисем иккĕмĕш квартăлта тата та пысăк ӳсĕмсем тума сăмах параççĕ. Вĕсем çулталăкри плана октăбĕр уйăхĕнче тултаратпăр, теççĕ.

Ив. Архипов.

Тивĕçлипе кĕтсе илеççĕ

Шупашкарти тир-сăран савăтĕнчи рабочисемпе служащисем майăн 1-мĕшне тивĕçлипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Апрелĕн 14-мĕшĕнче, йатарласа май уйавне хатĕрленсе иртерес ыйтупа, пĕтĕм савăтри рабочисемпе служащисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура тухса калаçнă рабочисем промфинплана иртерсе тултарасси тата продукци пахалăхне хăпартасси çинчен чарăнса тăчĕç.

Рабочисем çакăн пек обйазателствăсем илчĕç: пĕррĕмĕш квартăлта пурнăçа кĕмен промфинплана та тултарма, апрел уйăхĕнче планран иртерсе 1.500 мăшăр атă-пушмак кăлармала. Пĕтĕм савăчĕпе вăтамран илсен ĕç тухăçлăхне апрел уйăхĕнче 5 процент ӳстермелле. Продукци пахалăхне лайăхлатмала, 100 мăшăр атă-пушмакран 95 мăшăр пĕррĕмĕш сурт туса кăлармала.

Савăтра çак обйазателствăсене пурнăçа кĕртме социалисăмлă ăмăрту договăрĕсене тума тытăнчĕç. Атă-пушак цехĕ касса хатĕрлекен цеха ăмăртăва чĕнчĕ, касса хатĕрлекен цех тир-сăран цехне ăмăртăва чĕнчĕ. Ăмăрту йĕпле пынине кăтартса паракан бйуллетен тухма пулать.

Кунта çакна палăртмала: профессилĕ союзăн савăтри комитечĕ май кунĕсенче рабочисем вальли культурă ĕçсем тăвас пирки ĕçе тытăнман-ха. Пĕр спектакль лартса панипех культурăлă канăçа организацилени пулмасть.

А. С.

Квартăл планне 150 процентран кайа мар

ИШЛЕЙ. Шетмĕ-пуçĕнчи промысла ертелĕ 1-мĕш квартăл планне 120 процент тултарчĕ. Уйрăм стахановецсем пахă тĕслĕхсем кăтартрĕç. Акă М. Анисимов, Р. Степанов, А. Алексейева, А. Игнатйева йулташсем 150-шер процент, С. Йегоров, И. Волков, Е. Василйева, Д. Никифорова йулташсем 130 шер процент тултарнă.

Ертел правленийĕ пысăк тухăçлă ĕçлекенсене премисем пачĕ.

Рабочисем II-мĕш квартăлта татах та лайăхрах ĕçлесе, плана 150 процентран кайа мар тултарма обйазателствă илчĕç.

Р. Анисимов.

Скачкова йулташ бригади çĕнтерӳлĕ ĕçлет

Шупашкарти Водопйанов йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи Пелагейа Скачкова йулташ бригади йулашки вăхăтра ырă тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме пуçларĕ. Кулленхи нормăна вăл 195—215 процентран тултарса пырать.

Лайăх ĕçлени рабочисене ĕç тĕрĕс валеçсе панинчен, материалсене çителĕклĕ тăратнинчен килет. Скачкова йулташ хăйĕн опычĕпе ытти рабочисене паллаштарать. Унăн бригадинче ĕçлекенсем май уйавне апрел уйăх планне суркчен тултарнипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ.

И. Федоров.

Христос пулнă-и?

Чиркӳ çыннисем Христос пирки малтанхи христиансенчен йулнă исторйĕлĕ пĕлтернисем нумай, теççĕ. Çакна каланă чухне чиркӳ çыннисем чи малтанах „светуй сывлăшĕ" хавхалантарнипе Христосăн вĕренекенĕсем çырнă йевангели çине кăтартса параççĕ.

Чиркӳ çыннисем кăтартса паракан библинче çирĕме таран апостолсем тата Христосăн вĕренекенĕсем çырнă произведенисем пур иккен. Вăл произведенисенчен чи малтан, 70-мĕш çулсенче „Откровение Иоанна" тенĕ произведенине çырнă. Анчах çав „Откровение" тенине кам çырни паллă мар Мĕн каласа парать-ха унта Христос çинчен?

„Откровение" тенинче Христоса çын сăнарĕпе мар, йумахри чĕрчун пек сăнласа панă; йе тĕнче тунă чухнех турă пуснă çичĕ куçлă тата майракалă пӳтек пек, йе пĕлĕт çинчи çăварне хĕç хыпнă воин пек кăтартнă. Çавăнтах Христос пĕлĕт çинче тĕлĕнмеле çутатлă хĕрарăмран çуралнă тата вĕсене иккĕшне те шуйтанла çĕлен хăваласа çӳренĕ, тенĕ.

Çакăн хыççăн „Откровение" тăрăх Христос пулнă тенине ĕненме çук.

„Откровение" хыççăн 20—30 çултан, пĕррĕмĕш ĕмĕрĕн йулашкинче, христиансĕн уйрăм çырнă çырусем „Послания" тенисем пулнă. Вĕсене апостол Павел çырнă имĕш, анчах ăслăлăх çавăн пек апостол пулманнине, вăл посланисене никам та паллă мар христиансем çырнине кăтартса парать.

„Посланине" тенинче те, „Откровенине" пекех, Христоса пур çĕрте те çын сăнарĕпе мар, йумахри чĕрчунсемпе сăнласа панă: паллă мар вăхăтра тахçан тата темле майпа пĕлĕт çинчен çĕр çине аннă, çын сăнарне йышăннă, ӳт-пӳ тăхăннă, хурлăх курнă, вилнĕ; унтан чĕрĕлсе татах пĕлĕт çине таварăннă, тесе каланă. Çакăн пек йумахсене тата йумахри пек Христоса ĕненме пулать-и-ха? Христос хăçан та пулсан çĕр çинче пулнă пулсан, мĕншĕн-ха „Послания" çыракансем ун çинчен мĕн чухлĕ те пулин çынсем ĕненмелĕх шанчăклă фактсем пĕлтермен?

Христосăн çĕр çинчи пурнăçĕ çинчен çырнине, тахçан ĕлĕк çĕр çинче пурăннă текен Христоса етем сăнарĕпе кăтартнине епер „йевангелисенче" куратпăр. Чиркӳ çыннисем ĕненекенсене çав йевангелисене Христосăн апостолĕсем тата вĕсен вĕренекенĕсем çырнă тесе улталаççĕ. Тĕрĕссипе илсен, йевангелисене чиркӳ çыннисем каланă вăхăтран çĕр çул кайарахпа паллă мар христиансем çырнă. Йевангелисене 100-мĕш тата 150-мĕш çулсем хушшинче çырнă. Тен вĕсем Христос çын пулни çинчен мĕн те пулин шанчăклăн калаççĕ пулĕ? Çук, пачах çук.

Йевангелисене те пĕр тĕпчĕм те ĕненме май çук, мĕншĕн тесен, вĕсем Христос пирки йумахсем, пулманнисем çинчен çеç калаççĕ, çитменни çине каланисем пĕр-пĕринпе çыхăнмаççĕ.

Сăмахран, Христос çурални çинчен çырнă калавсенче йевангелист Матфей Христосăн ашшĕ-амăшĕсем йеврейсен авалхи Вифлейем тенĕ хулинче пурăннă тет, йевангелист Лука Назарет хулинче пурăннă, тет; вăл хула унчухне пулман та.

Матфей çырнă тăрăх, Христос хăйĕн ашшĕ амăшĕсен киленче çуралнă имĕш, Лука çырнă тăрăх таçта, уйра, хула хыçĕнчи витере çуралнă. Анчах çуралнă Христоса Ирод патша вĕлерессшĕн пулнă, уна вĕлерессшĕн нумай ачасене вĕлернĕ, анчах Христоса унăн ашшĕ-амăшĕсем Йегипĕта илсе тарнипе çеç çăлса хăварнă тесе калать Матфей. Лука урăхла калать: Христоса никам та вĕлерессшĕн пулман, унăн ашшĕ-амăшĕсем Христоса Ирод пурăннă хулари чиркӳве те пĕр шикленмесĕрех илсе çӳренĕ, тет вăл. Матфей çырнă тăрăх, Христоса чи малтанах Хĕвелтухăçĕнчи пуйан асамăçсем саламланă имĕш, Лука çырнă тăрăх, чухăнсем—кĕтӳçсем саламланă. Матфей, Марк тата Лука йевангелиссем çырнă тăрăх, Христос тĕне кĕнĕ хыççăнах 40 кунлăха çĕçен хире турра пуççапма, типĕ тытма кайнă иккен, Иоаннă йевангелист Христос чи малтанах Галилейский кана туйа кайнă, тет.

Йевангелисем пĕр-пĕрне çавнашкал хирĕçлени кашни утăмрах пур. Чăннипе илсен, йевангелисем пĕтĕмпех „чутăсем" çинчен çырнă калавсенчен тăраççĕ, вĕсене халĕ шкулсенчи кĕçĕн класри пĕр ача та ĕненмест.

Йевангелисем Христос çинчен нимĕнле шанчăклă пĕлтерӳсем те памаççĕ. Чиркӳ çыннисем вĕсем çине кăтартса парса, турра ĕненекенсене улталаççĕ çеç. Йевангелисем хыççăн çырнă авалхи христиансен кĕнекисем те Христос çын пулни çинчен нимĕнле шанчăклă пĕлтерӳсем те памаççĕ.

Анчах Христос çинчен христиан пулман писателсем, çав вăхăтра пурăннă авалхи писателсем, мĕн те пулин çырнă пулĕ? Çук, çырман. Истори ăслăлăхĕ христиан пулман авалхи писателсенчен пĕри те Христос çинчен лайăххине те, начаррине те çырман, пĕлтермен тесе кăтартса парать. Христос чăнахах пулнă пулсан, ун пек пулма та пултараймăн. Писателсем хăйсен вăхăтĕнчи нумай деятелсем çинчен çырнă, анчах Христос çинчен пĕр сăмах та çырман.

Çаксем хыççăн пĕр вывăд çеç тума пулать: чăннипе ниçта та нимĕнле Исус Христос та пулман, вăл—йумах кăна. Чиркӳ çыннисем Христос таксан ĕлĕк çĕр çинче пулнă тата вилнĕ тесе турра ĕненекенсене улталаççĕ.

Авалхи христиансен Христос çинчен калакан йумахĕ мĕнле тухса кайнă-ха?

Авалхи христиансем чурасенчен, хулари тата йалсенчи чухăнсенчен тухнă, вĕсене пуйансем-експлоататăрсем пусмăрласа пурăннă. Çак пусмăрта пурăнакансем пуйансен влаçне пĕтĕрме пикенни йаланах ăнăçсăр пĕтнĕ. Вара аптăраса çитнĕ чурасем тата чухăнсем хăйсене турă çеç пулăшма пултарать тенине ĕненме пуçланă. Майĕпе çавнашкал „çăлăнăç" паракан çын—Христос çинчен йумахсем пухăннă. Христоса ĕненекенсем пирвай вăл пырасса кĕтсе пурăннă; анчах кĕтсе илеймен. Кайран вара Христос таксан авалах вĕсем патне пына тесе, тепĕр хут „тĕнче пĕтнĕ чухне çеç пырать, тесе шутлама пуçланă. Çапла майĕпе чиркӳ çыннисем Христос çинчен калакан йумах тухнă.

Вăл йумахсем турра ĕненекенсене пысăк сийĕн кӳреççĕ. Çав йумахсем ĕççыннисене хăйсем çине шанма мар, турă-Христос çине шанма чĕнни тата та сийенлĕ. Вăл ĕççыннисене експлоататăрсемпе кĕрешессинчен, клас кĕрешĕвĕнчен пăрса йарать. Вăл турра ĕненекен ĕççыннисене социалисăм строителствинче активлăн хутшăнса ĕçлеме чăрмантарать. Христос çинчен калакан чиркӳ йумахĕсем пупсемпе вĕсен хыçĕнче тăракан тăшманла елементсемшĕн кăна усăлă.

Н. Р.

(„Безбожник" Журналтан).

1938 çулхи çураки

Районсем çураки умĕн

ПАТĂРЙЕЛ. Апрелĕн 15-мĕшĕ (телефон тăрăх). Колхозсем 1400 гектар клевĕр акса плана 78 процент тултарчĕç. Лÿцерна 469 гектар акмала пулнă пулсан, халĕ тар: акмала пулнă пулсан, халĕ 51,10 гектар акнă. Вăл шутран „Çăлтăр“ — 78 гектар, „Роза Лÿксембург“ — 60 гектар, „Октябĕр йалавĕ“ — 37 гектар, „Трактăр“ — 29 гектар акса райçĕрĕç пайĕ плана тултарчĕç.

Колхозсем кĕрхи тыра калчисене апат парас ĕçе те тытăнчĕç.

Н. Пушкин.

ТАВАЙ, апрелĕн 15-мĕшĕ (телефон тăрăх). Клевĕр акас ĕç сарăлсах пырать. Кăçал районри колхозсен 2200 гектар клевĕр акса хăвармала. Апрелĕн 15-мĕшне 19 колхоз 1165 гектар акнă.

Шупуçĕнчи Чапайев йачĕпе тăракан колхоз апрелĕн 14-мĕшĕнче 6 гектар çинчи кĕрхи тула калчине минераллă çăнăхсем сапса апат пачĕ. Районра нумай колхозсенче кĕрхи калчасене тислĕк шĕвекĕпе тата типĕ майпа апат парас ĕçе тытăнчĕç.

„Майăн 1-мĕшĕ“, „Шурăмпуç“, „Красная Чувашия“ тата Смидович йачĕпе тăракан колхозсенче пурĕ 450 центнĕр вăрлăхсене йаровизацилерĕ. Ку колхозсем çак çывăх кунсенчех акана тухаççĕ.

Т. Майорăв.

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Уй-хир йуртан тасалса пынă май клевĕр акас, кĕрхи калчасене апат парас ĕç пуçланса кайрĕ.

Иккĕмĕш „Липăвкари“, „Радио“ колхоз апрелĕн 9-мĕшĕнчех 15 гектар çине клевĕр акса хăварчĕ.

Й. Çигайĕв.

ИШЛЕЙ, апрелĕн 16-мĕшĕ (телефонпа). Кĕрхи калчасем çине районĕпе 136 гектар клевĕр акнă. „Чăваш Коммунĕ“, „Алино“ тата Тельман йачĕпе тăракан колхозсем кĕрхи тыра калчисене апат пама тухрĕç.

Çуракине тухма район пĕтĕмпех хатĕрленсе çитеймен-ха. Районĕпе пурĕ 30 центнĕр клевĕр вăрлăхĕ çитмест. Çавăн пекех тата суртла вăрлăхсене те çул пĕтиччен улăштарса пĕтермен, пурĕ 700 центнĕр тула вăрлăхĕ улăштармасăр йулнă.

ТУТАРКАС, апрелĕн 16-мĕшĕ (телефонпа). Колхозсем клевĕр акма тухнă. „Хĕрлĕ Сормăвă“, „Хĕрлĕ Паттăр“ тата ытти колхозсем кĕрхи тыра калчисене апат пама тытăннă. Çавăнпа пĕрлех хăшпĕр колхозсем çĕрулми тата ута тума акмали вика вăрлăхĕсене йаровизацилеме хунă. „Париж Коммунĕ“ колхоз 8 центнер çĕрулми, 4 центнĕр вика вăрлăхĕ йаровизацилеме тытăннă.

Кунта та суртла тула вăрлăхне улăштарса çитермен. Суртлă вăрлăх акмали плана тултарма татах 350 центнĕр кирлĕ. Сĕлĕ вăрлăхне те пĕтĕмпех улăштарса çитереймен.

ТРАК, апрелĕн 16-мĕшĕ (телефонпа). Апрелĕн 15-мĕшне районĕпе пурĕ 223 гектар клевĕр акнă. Анчах хăшпĕр колхозсенче клевĕр вăрлăхĕ çитмест. Пурĕ 6 центнĕр кирлĕ. Енер, апрелĕн 16-мĕшĕнче, çав вăрлăха илме Шупашкара машинă йанă пулнă, уншăн колхозсем укçа та куçарнă, анчах нарйад пулнă пулсан та госсортфонд кантуре парса йаман.

„Правда“ тата Чубарь йачĕпе тăракан колхозсенче хальтe бригадăсене организацилесе çитермен.

ÇĔРПУ, апрелĕн 16-мĕшĕ (телефонпа). Районĕпе кăçал пурĕ 3000 гектар клевĕр акмала. Пайанхи куна 465,5 гектар акса хăварнă. 5 колхозăн клевер вăрлăхĕ çитмест.

„Çамрăк вăй“ тата „Сталинцы“ колхозсем кĕрхи тыра калчисене апат пама тухрĕç. Чылай колхозсем çĕрулми вăрлăхсене йаровизацилеме тытăннă. Районра чи пысăк çитменлĕх вăл — вăрлăхсене суртласа кондицилĕ туса çитерейменни.

ШĂХАСАН, апрелĕн 16-мĕшĕ (телефонпа). Апрелĕн 15-мĕшне районĕпе пурĕ 390 гектар клевĕр акна. Чылай колхозсем çĕрулми вăрлăхсене йаровизацилеме тытăннă. Хальтe колхозсенче вăрлăхсене типĕ майпа емеллеççĕ, сĕлĕ вăрлăхне чÿхеме формалин çителĕклĕ илсе хатĕрленĕ.

Йединоличниксем синчен маннă

ЙĔТĔРНЕ. Пайан-ыранах акана тухмала. Çĕнĕ-Тинкешри Максим Горький йачĕпе тăракан колхоз çуракине тивĕçлипе хатĕрленсе апрелĕн 10-мĕшĕнче 15 гектар çине клевĕр акса хăварчĕ. Чылай колхозсем акана тухма лайăх хатĕрленнĕ. Анчах йединоличниксем хушшинче çуракинĕ хатĕрленес ĕç пачах урăхла. Райçĕрĕç пайне йалсоветсем тăратнă сводкăсем тăрăх районĕпе пурĕ 1725 йединоличник хуçалăхĕ шутланать. Вĕсенчен чылайĕшĕн вăрлăхсем çитмеççĕ. Нумай çĕрте йединоличниксем вăрлăхсене суртламан, лабораторинче тĕрĕслемен. Йединоличниксен вăрлăхсем мĕн таран йурăхлине, çитнипе çитменнине никам та тĕрĕслемен.

Акă, Каташ йалсоветнех илсе пăхар. Кунта йединоличниксем хĕлĕпе те çуракине хатĕрленесси çинчен шутламан. Йалсоветĕ те вĕсемпе пачах ĕçлемен.

Уйкас йалсоветĕнче пурĕ 21 йединоличник. Çуракине тухма пĕри те хатĕр мар. 21 хуçалăхран 8 хуçалăхĕн кăна лашасем пур, ыттисем çураки ĕçĕсене кам лашисемпе иртересси паллă мар.

Мăн Чураш йалсоветĕнчи йединоличниксем те çавнашкалах. Нумайĕшĕн сÿресемпе плугсем çук. Вăрлăхсене суртламан, суртлă вăрлăхсемпе улăштарман. Çавнашкалах Тури-Ачакри йалсоветĕнче те йалсовет председателĕ Мурзайĕв йединоличниксем хушшинче кăçал хĕлĕпе те пухусем туса çуракине мĕнле хатĕрленесси çинчен ăнлантарса паман.

Райĕçтăвкомпа çĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем те йединоличниксем хушшинче ĕç мĕнле пынине пĕлмеççĕ. Йетĕрнесен йединоличниксене вăйлă тырпулăшăн кĕрешес ĕçе хăлех хутшăнтармала.

Ник. Цветков.

Йаровизатăрсем ĕçе тытăнаççĕ

Патăрйел районĕнчи Нĕркеçри тата Йанкассинчи колхозсем кăçалхи йалхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн иртерсе, пысăк тупăшлă тырпул туса илес тĕлĕшпе тунă ăмăрту догăварĕ мĕнле пурнăçа кĕрсе пынине тĕрĕслесе тухрĕç.

Ăмăрту догăварне тĕрĕсленĕ хыççăн, ăмăртса ĕçлекен икĕ колхоз та кăçалхи больщевикла çуракине пур йенчен те хатĕрленсе çитнине палăртрĕç.

Шмидт йачĕпе тăракан колхоз акмали вăрлăхсене кирлĕ таранах суртласа тасатса хунă. Вăрлăхсем мĕнле шăтнине те тĕрĕслеттернĕ. Вĕсем пурте акма йурăхлă. Кăçал тĕш тыра вăрлăхĕсене пĕтĕмпех йаровизацилесе акаççĕ. Халĕ 17 çынна йаровизаци тăвас ĕçре ĕçлеме çирĕплетнĕ. Йаровизатăрсен хăйсене кирлĕ хатĕрсем çителĕклĕ. Н. П.

Сулйĕр строительствинче ĕçлеме

Сĕнтĕрвăрри райĕçтăвкомĕн сулйĕр пайĕ сулйĕр строительствине вальли кадрсем хатĕрлес майпа курс иртерет. Хальхи вăхăтра курсра сулйĕр уполномоченнăйĕсем пулма 4 çын, бригадирсем пулма 17 çын вĕренеççĕ.

План тăрăх та 51 çынна вĕрентме палăртнă. Анчах Аксарина, Амачкина, Шĕнерпуç, Кĕчкей, Турханкасси йалсоветсемпе „Социализм“, „Хĕрлĕ Çар“ колхозсем курсра вĕренме никама та йаман.

„Красный октябĕр“ колхоз (Кирăв облаçĕ, Вожгальск районĕ) 1937 çулта пит пысăк тупăш илнĕ. Вăл колхоз-миллионер. Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выстăвкине хутшăнмали кандидат.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Колхозăн ĕне витинче.

(Сойузфото).

Пысăк тупăшлă фермă

Йетĕрне районĕнчи Калинин йачĕпе тăракан колхозăн сĕт-çу ферми 1932 çулта пуçланса кайнă. 1933 çулта Дербеньов йулташа фермă пуçлăхĕ турĕç. Вăл хăй умĕнче икĕ пысăк задача тăнине аван ăнланса илчĕ. Çав задачăсенчен пĕри—фермари выльăх-чĕрлĕх йышне нумайлатасси, тепри—выльăхсен ăратне лайăхлатса, фермă тухăçлăхне хăпартасси. Çак задачăсене пурнăçлас майпа Дербеньов йулташ фермари кашни выльăха пахалăхĕ йенчен тĕрĕслерĕ. Фермари ĕнесем сахал тухăç паракансскерсем пулнă, çулталăкĕпе вĕсем 800 литртан та сахал сĕт панă. Ăратлăхĕ йенчен вĕсем пурте пекех выранти ăратсăр ĕнесем пулнă, хĕрлĕ горбат ăратли ик-виç пуç çеç шутланнă. Хăшпĕр колхозниксем, çавна кура, сахал тухăç паракан ĕнесене сутса, ăратлă ĕнесем туйанма сĕннĕ. Анчах Дербеньов йулташ шанчăкларах майпа—фермари выльăхсене пысăк пахалăхлă вăкарпа чуптарса—метизацилесе аванрах çитерсе лайăхлатма шут тытрĕ. Колхоз правленийĕ фермăна хĕрлĕ горбат ăратлă тынасем тата вăкăр илсе пачĕ те, çак вăкăрпа вырăнти ĕнесене чуптарса метизацилеме пуçларĕç. Выльăхсен апатне лайăхлатма колхоз курăксем, тымарçимĕçсем акма тытăнчĕ. Хĕлле çитерме çуллен силос хатĕрленĕ.

Çапла тăрăшса ĕçленипе фермари выльăхсен хисепĕ те, пахалăхĕ те çулран çул ÿссе пынă.

Ĕнесĕр колхозниксене пулăшас майпа фермăра ÿстернĕ пăрусенчен 20 пăру ытла колхозниксене сутнă. Калинин йачĕпе тăракан колхозра ĕнесĕр колхозник çук. Выльăхсен пахалăхĕ те улшăнчĕ. 1933—34 çулсенче фермăра ăратлă выльăхсем пулман пулсан, хальхи вăхăтра фермăра 73 пуç хĕрлĕ горбат ăратлисем. Вĕсенчен нумайĕшне районри ăрат кĕнеки çине çырнă. 1935 çулта районри ăрат кĕнеки çине çырни фермăра 19 пуç, 1936 çулта 21 пуç шутланнă. 1938 çулхи йанварĕн 1-мĕшĕ тĕлне районри ăрат кĕнеки çине çырнă выльăхсен хисепĕ 28 пуça çитет, çав шутран 14-шне государствăн ăрат кĕнеки çине çырнă.

Фермари выльăхсене апатлантарса тăрасси тата пăхасси аванланса пынипе ĕнесен сĕт тухăçлăхĕ те ÿсесех пырать.

Хăш-пĕр ĕнесем çулталăкне 2721-шер литр ытларах сĕт параççĕ. Сĕт тухăçлăхĕпе ку фермă районĕпе чи малти вырăнта тăрать. Çамрăк пăрусен чĕрвиçĕ çулран-çул ÿссе пыни те фермăн çитĕнĕвĕсене лайăх кăтартса парать. 6 уйăх тултарнă тĕле фермари пăрусем вăтам шутпа 117 килограм тайаççĕ. „Зак.т“ йатлă вăкăр 5 уйăхрах 129 килограм тайнă. Фермă ÿсе пынине фермăн тупăшĕ ÿсе пынинчен те курма пулать. 1935 çулта колхоз фермăран—25128 тенкĕ, 1936 çулта 28075 тенкĕ, 1937 çулта 42303 тенкĕ тупăш илнĕ. 1937 çулхи тупăш колхозри ытти мĕн пур тупăшсен çурри ытла пулса тăрать. Фермăран пысăк тупăш илнипе, Калинин йачĕпе тăракан колхоз кашни ĕçкунĕ пуçне 1 тенкĕ те 50 пус укçан валеçрĕ.

Фермăн 50 ĕне тăратмалăх стандартлă вите пур. Вите çумĕнче ĕнесене пăруланă вăхăтра хупмали йатарласа тунă уйрăм пÿлĕм пур. Кунсăр пуçне, çамрăк пăрусене тата асларахисене хупмали уйрăм витесем пур.

Дербеньов йулташ ĕне сăвакансене, выльăх пăхакансене, пăру пăхакансене хăй мĕн пĕлнине каласа пама тăрăшать. Фермăра чаплă стахановĕнсем çитĕнчĕç. Пăру пăхакан Петр Васильевич Лаптев 67 çула çитнĕ пулсан та пăрусене пит аван пăхса ÿстерет. Ăна йулашки çулсенче 10 хут та ытла премисем панă. 1934 çултанпа ĕне суса пурăнакан Е. Дербеньова йулташа та темиçе хут та премисем панă. Фермăра ĕçлекенсем улшăнса тамаççĕ, вĕсене йалхуçалăх ертелĕн уставĕ тăрăх фермă çумне çирĕплетнĕ.

М. И. Куçмин.

Савăнăçлă та телейлĕ пурнăç çинчен калакан кĕнеке

М. И. КАЛИНИН. Совет влаçĕ ĕçсынисене мĕн пачĕ. Чăвашсен Государствă издательстви. Шупашкар, 1937 çул. 10.100 екземпльар пичетленсе тухнă, хакĕ 25 пус.

Çак кĕнеке ССР Сойузĕн Верховнăй Совет Президиумĕн председателĕ М. И. Калинин йулташ ССРС Верховнăй Совечĕн суйлавĕсем умĕн çырнă. Унта совет влаçĕ иртнĕ çирĕм çул хушшинче ĕçсынисене мĕн панине, Совет Сойузĕнчи халăхсем коммунистсен партийĕ йертсе пынипе мĕнмĕн кĕрешсе илнине лайăх каласа панă.

Совет Сойузĕнче експлоататăрлă класлене пĕтернĕ, вĕсемпе пĕрле—кризиссене, ĕçсĕрлĕхе, чухăн пурнăçа, халăхсен йухăнчăк пурнăçне пĕтернĕ; çынна çын експлоатацилеме пултарас майсене пĕтернĕ. Колхоз хресченĕсене кулакпа улпут експлоатацинчен хăтарнă çеç мар, хресченсене çĕр панă тата хальхи вăхăтри техникăна панă.

Совет Сойузĕнчи халăхсем пысăк ырлăхпа пурăнаççĕ, савăнăçлă та телейлĕ пурăнаççĕ. Совет Сойузĕнчи халăхсем пĕр-пĕрипе туслă пулса социализм строительствинче хастарлă кĕрешеççĕ. Совет Сойузĕнче маçтăрсем та, рабочисем те, хресченĕсем те, интеллигентсем та пĕр ĕмĕт — социализмăн лайăхрах ĕçлесси.

Çак кĕнеке совет çĕршывĕнчи пурнăç, рабочисемпе колхозниксен тата интеллигенци пурнăçĕ мĕнле улшăнса çĕнелнине кăтартса парать. Унта Совет Сойузĕнчи мĕн пур халăхсем туслă пурăнни çинчен, халăх творчестви сĕкленни çинчен çырнă.

Рабочисемпе колхозниксем коммунистсен партийĕ йертсе пынипе ССР Сойузне хăватлă социализмлă державăна турĕç. М. И. Калинин йулташăн кĕнекине çавăн çинчен çăмăл, ăнланмала чĕлхепе çырнă. Çак кĕнекене пурин те вулама тăрăшмала.

П. Дубровин.

Кашни суйлавçă тĕплĕн пĕлтĕр

ИШЛЕЙ. Тăрăн Çырма йалсоветĕнче РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренес ĕçе лайăх йĕркеленĕ. Кунта агитатăрсем пĕр-пĕрипе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ку йенĕпе уйрăмăнах В. Степанăв, Ф. Васильĕв тата Максимăв комсомолецсене кăтартмала. Вĕсем кашнийĕх виçшер заняти туса иртерне. Заньатисене йалан тĕплĕн хатĕрленсе пыраççĕ. Çакна кура суйлавçăсем те заньатине пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ.

Çав вăхăтрах Йамайкасси йалсоветĕнче агитацине пропагандă тата культура-массăллă ĕç çителĕксĕр. Йалсоветĕнче пурĕ 615 суйлавçă шутланать. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренме 6 кружок организациленĕ. Анчах кружоксем пайанхи куна та ĕçе тытăнман.

Уйри Сурт, Шăнăрлăвар йалĕсенче пухусем туса суйлав саккунĕсем çинчен икшер калаçу иртерниех ăнланса ларнă. Йалсоветĕнчи йулташсем суйлав саккунĕсем çинчен суйлавçăсене пухусенче çеç ăнлантарса пама тăрăшаççĕ. Ку аван ĕç. Анчах унпах ĕçлени çителĕксĕр. Мĕншĕн тесен, пухусем час-часах пулмаççĕ тата пухусенче ытти ыйтусем тăрăх калаçусем вăрăма чăсăлаççĕ.

Йалсемпе колхозсенче агитацине пропагандă тата культмассăллă ĕçсене вулав çурчĕн пуçарса пымала. Вулав çуртĕнче литература та çителĕклĕ пулмала. Кĕнекесене суйлавçăсем кашни кунах илсе вулама пултарччĕр. Çак тĕлĕшпе Йамайкасси йалсовечĕ пачах та ĕçлемест. Вулав çуртĕнче суйлав саккунĕсем çинчен çырнă кĕнекесем çук. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ В. Иванов йулташ агитатăр шутланать пулин те, Çеçмер йалĕнче суйлавçăсене пухса пĕр заньати те туса иртермен. Çавăн пекех хут пĕлменнисене вĕрентме тытăнман.

Лепетер йалĕнче те суйлав саккунĕсене вĕренес тĕлĕшпе ĕç çавнашкалах пĕр вырăнта тăрать. Ĕçĕ йĕркелемешкĕн Пакăвлĕв йулташа хушнă, анчах вăл, хăйне ку йал çумне çирĕплетнĕренпе пĕр уйăх иртрĕ пулин те, ĕçе йĕркелесе йаман-ха.

ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйламалли кампанийĕнче вулав çурчĕсемпе клубсенче ыйтусемпе ответсен каçĕсем пулса иртнĕччĕ. Хальхи вăхăтра йалсенче çакна йĕркелемен. Çын пек массăллă-ăнлантарулла ĕçсене халĕ те сарса пымала. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене кашни суйлавçă патне çитерес тесе тăрăшса ĕçлемелле.

Г. Шчербаков.

Таван çĕршыв оборонинĕ тĕреклетме

ТУТАРКАС. „Восток“ колхоз членĕсем Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене ăмăртса илеççĕ. Апрелĕн 10-мĕшне 250 тенкĕлĕх илсе укçине тÿлесе татрĕç.

Николайĕв.

ПАТĂРЙЕЛ. Педучилищĕри Осоавиахим организацийĕ лотерей билечĕсене сарас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Вĕренекенсем пурте Осоавиахимăн 12-мĕш лотерей билечĕсене илеççĕ,—билетсене 1300 тенкĕлĕх сарчĕç. В. Гераçимăв.

ÇĔРПУ. Фельдшерсен шкулĕнче лотерей билечĕсене 900 тенкĕлĕх сарчĕç. Вĕренекенсенчен Ф. Никитина—15 тенкĕлĕх, С. Васильйĕв 8 тенкĕлĕх Леонтйĕв—6 тенкĕлĕх илчĕç. Н. Йадровкин.

Килхуçи хĕрарăмсем суйлава хатĕрленеççĕ

Шупашкарти Чебоксарскайа урамра пурăнакан килхуçи хĕрарăмсем—11 çын РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене кружокра вĕренеççĕ.

Кружока агитатăр Петров йулташ йертсе пырать. Заньатисем йĕркелĕ пулса пыраççĕ. Ку тăранаçитсе 4 заньати туса иртерне те ĕнтĕ.

Малтанах суйлавçăсем РСФСР тата Чăваш АССР Конституцийĕсене, иккĕмĕшпе виççĕмĕш заньатисенче пирĕн суйлав саккунĕсене вĕренчĕç.

4-мĕш заньатинче (апрелĕн 13-мĕшĕнче) ПСК(б)П Чăваш обкомĕн V Пленумĕн РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленесси çинчен йышăннă постановленине сÿтсе йаврĕç.

Кружок заньатийĕсенче йаланах картасемпе усă кураççĕ. Суйлавçăсем карта тăрăх ССР Сойузĕн, Сойузлă тата Автономлă республикасен, крайсен тĕп хулисемпе чиккисене кăтартса пама пĕлеççĕ.

Сталинла Конституцине тата РСФСР па Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренни чухне килхуçи хĕрарăмсем хăйсен ĕлĕкхи йавăр та хенхурлă пурнăçне веçĕмсĕр ылханса, хальхи телейлĕ пурнăçшăн хĕпĕртесе сăмахсем калаççĕ.

— Епĕ ĕлĕк Йехрем хуçа патĕнче хăма савăтенче ĕçленĕ. Хулçурăм татăлса анас пекех кунне 14—15 сехетшер ĕçлеттерĕр. Çапах та ĕçукçи уйăхне 25—30 тенкĕ çеç илсе пуранна. Хăшпĕр арçынсенчен нумайрах тата лайăхрах ĕçлесен те, пире „хĕрарăм“ тесе ĕçукçи арçынсенчен сахалтарах парăччĕç.

— Савăтра 10 çул хушши ĕçлесе те мана пĕр кунлăх отпуск паман. Канмалли кунсенче те канма вăхăт пулман. Пурнăç чăтмала мар йавăрччĕ. Çав ылханлă пурнăçран пире Октябĕр революцийĕ хăтарчĕ.

Мĕншĕн савнас мар манăн халĕ! Епĕ пур тĕлĕшпе те лайăх та савăнăçлă пурăнатăп. Ывăлăмсем манăн савăтра стахановец пулса ĕçлеççĕ. Пурнăç кунран-кун лайăхланса пырать,—тет В. А. Сапожникăва йулташ.

Вăл 60 çулта пулин те Сталинла Конституцийĕ виçĕ хутчен вуласа тухнă, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕренмелли кружок заньатийĕсене сиктермесĕр çÿрет. Суйлав саккунĕсене лайăх вĕренет, хаçат-журналсем вуласа тĕнчери пăру-тăру ыйтăвĕсене вăхăтра пĕлсе пырать. Заньатисенче вăл йалан ах активлă.

Арк. Нестерĕв.

ВĔРЕНӲ ПАХАЛĂХĔШĔН КĔРЕШЕТПĔР

Иртнĕ 1936—37 вĕренÿ çулĕнче Палтайри (Йетĕрне р.) вăтам шкул пысăк йăвăрлăхсем тÿснĕ. Шкулта сăпса йăвă çавăрнă халăх тăшманĕсем вĕрентÿпе воспитани ĕçне кунран-кун иштĕлтерсе пынă. Ачасене пĕлÿ парас мар тесе, программăна йури пăснă, тĕпрен аркатнă. Тăшмансем хăйсем ĕмĕтленнине чылайăх тума ĕлкĕрнĕ. Иртнĕ çулта 10-мĕш клас вĕренсе пĕтернисенчен аслă шкула пĕри çеç кĕнĕ. Çавăн пекех 7-мĕш клас вĕренсе пĕтернисенчен те педучилищăна кĕме 60 ачаран пĕр ача кăна пултарнă. Ыттисем шкул тулашĕнче тăрса йулнă.

Тăшмансене шкултан тивĕçлĕ органсем тăпăлтарса кăларчĕç. Анчах тăшманла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтересси çăмăлах пулса пымарĕ. Йапăхса кайнă шкула ура çине тăратма нумай вăй кирлĕ пулчĕ.

1937—38 вĕренÿ çулĕ пуçланас умĕн шкулта директăрпа пĕр учительсĕр пуçне никам та пулман. Декабĕр уйăхĕ тĕлне те кунта 4 учитель çитмен. Халĕ тата историпе вĕрентекен преподаватель çук. Учительсем çитменни ĕçре сахал мар чăрмантарчĕ. Çапах епĕр вĕренĕве лайăхах йĕркелеме тăрăшрăмăр.

Вĕрентÿпе воспитани ĕçĕн пахалăхне хăпартассишĕн, дисциплинăна çирĕплетессишĕн Палтай вăтам шкулĕ Мăн Чураш вăтам шкулĕпе социализмла ăмăртăва тухрĕ. Унтан класна клас, учительпе учитель, вĕренекенпе вĕренекен кашни пĕр-пĕрипе ăмăрту догăварĕсем турĕç. Мăн Чураш шкулĕнчи учительсем социогăвăр пурнăçа мĕнле кĕрсе пынине март уйăхĕнче килсе тĕрĕслерĕç, хăйсен ĕçĕсем çинчен те каласа пачĕç.

Палтай вăтам шкулĕнчи учительсем Мăн Чураш вăтам шкулĕн ĕçĕсемпе паллашма апрел уйăхĕнче кайаççĕ.

Социализмла ăмăрту догăварне пурнăçа ăнăçлăрах кĕртес тесе, учительсем шкулта каçхи заньатисем туса иртереççĕ. Ку заньатисенче çĕнĕ материалсем çинчен сăмах хускатмаççĕ.

Учительсем вĕренекенсене иртнĕ уроксен материалĕсем çинчен тĕплĕнрех каласа параççĕ, материала кура тĕрлĕрен упражненисем тутараççĕ.

Шкулти ĕçсем çирĕп расписани тăрăх пулса пыраççĕ. Шкулта нагльаднă вĕрентессине йĕркелеме Мускавран 3.000 тенкĕлĕх ытла тĕрлĕрен приборсем илсе килнĕ. Кăçалхи çулах йестествознани кабинечĕ организациленĕ. Ку ĕçсем директăрпа (А. П. Степеркин) вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ (В. Н. Голицын) хастарлă ĕçленипе пулнă.

Преподавательсем вальли тĕрлĕрен дисциплинăпа тĕрлĕрен методикăлă журналсем çырăнса илнĕ. Учительсем ПСК(б)П историне вĕренеççĕ, ĕçри пысăк ыйтусемпе методикăлă канашлусем туса иртереççĕ. Хăйсен пĕлĕвĕсене хăпартассишĕн тăрăшаççĕ, халăх хушшинче те активлăн ĕçлеççĕ. Хальхи вăхăтра колхозниксемпе йединоличниксене РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламалли Положенисене вĕрентеççĕ. Вĕренекен ачасен ашшĕ-амăшĕсене хĕлкаçа 2—3 хут пухса каласнă. Çуркуннехи каникул вăхăтĕнче йалсене кайса вĕренекенсен ашшĕ-амăшĕсемпе уйрăм калаçусем туса иртернĕ.

Учительсем çамрăк, пурте тенĕ пекех пĕррĕмĕш çул ĕçлеççĕ. Вĕсем пĕр-пĕрин урокĕсене пырса итлеççĕ. Пĕрин опычĕпе тепри усă курма вĕренет. Асăрхана çитменлĕхсем çинчен пĕр-пĕрне вăхăтра каласа параççĕ.

Ачасен тавракурăмне анлатас тĕлĕшпе шкулта музыкçăсемпе йурăçăсен, театр ĕçне йуратакансен, Ворошилăв пек тĕл пеме вĕренекенсен, литературăпа интересленекенсен, çамрăк авиомоделиссен, шахматиссен, çар ĕçне вĕренекенсен кружокĕсем ĕçлеççĕ.

Шкулта шавлă оркестр пур. Шавлă оркестр вальли Мускавран 200 тенкĕлĕх инструментсем çырăнса илнĕ. Шавлă оркестр хорпа драмкружок революцилле уйавсенче лайăх концертсем параççĕ. Ачасен пултарулăхне организацилес тĕлĕшпе уйрăмах Н. М. Чугуновпа Д. П. Мартйанăвă йулташсем аван ĕçлеççĕ.

Ворошилăв пек тĕл перекен çамрăксен кружокĕнче 40 ача. Вĕсенчен 19-шĕ нормăсем панă.

Литкружок хăйĕн вăйĕпе „Çамрăк хунав“ йатлă журнал кăларать. Кружок членĕсем журналта хăйсен сăввисемпе калавĕсене пичетлеççĕ. Мартăн 31-мĕшĕнче литкружок Максим Горький çурални 70 çул тултарнă йатпа вечĕр туса иртерчĕ. Вечĕрта ачасем Максим Горькин произведенийĕсемпе хăйсен сăввисене вуласа пачĕç.

Кунсăр пуçне, шкулта тÿрăсăрсен кружокĕ те ĕçлет.

Комсомол йышĕ ÿссех пырать.

Çак çитĕнÿсемпе пĕрлех шкулăн пысăк çитменлĕхсем пур.

Кăçал шкулăн икĕ хутлă çĕнĕ çуртне туса пĕтермеле пулнă. Строительствă ĕçĕ йăвăррăн пырать. Шкул вальли 400 кубла метр йăвăç, 90.000 штук кирпĕчĕ кирлĕ, анчах ку материалсем çук-ха.

Шкулăн кивĕ çурчĕ тăвăр. Мĕн пурĕ кунта 470 ача вĕренет. Классем çитмеççĕ. Çавăн пирки икĕ сменăпа ĕçлеме лекет.

Тÿрех каламала, ачасем кăçал шкула лайăх çÿреççĕ. Шкула мĕнле çÿренине кăтартакан хисеп вĕренÿ çулĕн I-мĕш чĕрĕкĕнче—97,3 процент, II-мĕш чĕрĕкĕнче—97,7 проц. пулнă пулсан, III-мĕш чĕрĕкре 100 проц. патне çывхарчĕ. Вĕренÿ пахалăхĕпе дисциплинă та кунран-кун хăпарса, йусанса пырать.

Иртнĕ çулта пĕр класра икшер çул ларакансен шучĕ пысăк пулнă. Кăçал пĕр класра 2 çул ларакансем (Йефимăв, Бажайкин—5 „б“ кл., Зайцĕв—7 „а“ кл. тата ытти те) „отлично“ тата „хорошо“ паллăсемпе вĕренсе пыраççĕ.

Пуçламĕш классене илсен, кунта кăçал та каллиграфи тĕлĕшпе (уйрăм классенче) ĕç питĕ йапăх пырать. Хăшпĕр педагогсем хăйсем те питĕ илемсĕр çыраççĕ. Те вĕренекен ача, те педагог çырнă — уйăрса илме çук.

Вĕренекенсен çырнă йе вуланă чух хута кĕнекене куçран 2—3 дециметр аййккарах тытмала. Анчах хăшпĕр педагогсем çавна асăрхамаççĕ. Вĕренекен ача мĕнле май килчĕ çапла ларать. Кĕнекене çывăх тытса вуласа, хут çине тăранса çырса, вăл хăйĕн куçне пăсма пултарать.

Ачасене тасалăха, типтерлĕхе, йĕркелĕхе вĕрентмеле. Ачасем тепĕр чухне тетрадсене парттă тăрăх хурса çыраççĕ. Хăшĕн-пĕрин алли чернилпа çунă пек пулать. Лапăрчăк алипе вăл хăй тетрадне те лапăртаса пĕтерет.

Çак çулте кăтартнă çитменлĕхсене хăшпĕр педагогсем çийĕнчех пĕтерме тăрăшмаççĕ. Çавăнпа та типтерсĕрлĕх, йĕркесĕрлĕх ачасен йăлине ĕмĕрлĕхех кĕрсе йулма пултарать.

4-мĕш классенчен пилĕкмĕш класа кĕнисем уйрăмах илемсĕр тата нумай йăнăш туса çыраççĕ. Ку ĕнтĕ пĕтĕмпех пуçламĕш шкулта йапăх вĕрентнинчен килет. Тăватă çул хушши вĕренсе йалана кĕнĕ кăлтăксене 5-мĕш класра тÿрлетме питĕ йăвăр. Тăван чĕлхене илсен, ачасем чылай правилăсене (2-мĕш, 3-мĕш, 4-мĕш классенче вĕреннисене) пĕрттe пĕлмеççĕ.

Паллах, малтан начар вĕрентсе пăснипе, кайран 3—4 уйăх хушшинчех тÿрлетме çук.

Епĕр илемлĕ çырма вĕрентессишĕн çине тăрса ĕçлетпĕр. Вĕренекенсен каллиграфийĕ йусанса пыни сисĕнет.

Тăшманла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерсе, епĕр шкулти вĕрентÿпе воспитани ĕçне çÿлĕ вырăна хăпартассишĕн, ачасене паха пĕлÿ парассишĕн кĕрешетпĕр. Çак кĕрешÿре епĕр çирĕп утăмсем турăмăр. Халĕ Палтай вăтам шкулĕ çуркуннехи пĕлÿ тĕрĕслевне хатĕрленет. Пирĕн шкулта пĕр класра иккĕмĕш çул пĕр ача та йулмала мар, кашни класа, пурте тĕрĕс куçмала, кăçал вĕренсе тухакансем пурте аслă шкулсене кĕмелле.

С. Йакăвлĕв.

Азербайджан искусствин вунăкунлăхĕ иртнĕ

Йулашки концертра И. В. Сталин, В. М. Молăтав, Л. М. Каганович, К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. А. Андрейĕв, В. Й. Чубарь, А. И. Микойан, С. В. Косиор, А. А. Жданăв, Г. М. Димитров, М. Ф. Шкирйатăв, М. Д. Багирăв йулташсем пулнă

Азербайджан искусствин вунăкунлăхĕ столицăн культурăллă пурнăçĕнче пит паха событи пулса тăнă. Вăл совет Азербайджан халăхĕсен илемлĕ те савăнăçлă творчĕствине чаплăн кăтартса панă.

Апрелĕн 15-мĕшĕнче ССР Сойузĕн Пысăк театрĕнче пулнă йулашки концерт Азербайджан халăх искусствин чăн-чăн праçникĕ пулса тăнă. Концерт калама çук пысăк ăнăçлăхпа иртнĕ.

Концерта Азербайджанăн государствă филармони коллективĕсем—хор, халăх инструменчĕсен оркестрĕсем, халăх ташшисен ансамблĕ; хор тата М. Ф. Ахундăв йачĕпе тăракан театрти оркестрпа солиссем, ашугсем, харпăрхăй пултарулăх искусствин чи лайăх представитĕлĕсем хутшăннă.

Азербайджан искусствин вунăкунлăхĕн йулашкинче лартнă концертра И. В. Сталин, В. М. Молăтав, Л. М. Каганович. К. Й. Ворошилăв, М. И. Калинин, А. А. Андрейĕв, В. Й. Чубарь, А. И. Микойан, С. В. Косиор, А. А. Жданăв, Г. М. Димитров, М. Ф. Шкирйатăв, М. Д. Багирăв йулташсем пулнă.

Концерт пĕтсен пурте вунăкунлăхра пулнисене хĕрӳлĕн саламланă.

(ТАСС).

Китайри вăрçă

ХАНЬКОУ, апрелĕн 14-мĕш. (ТАСС). Çурçĕр Китайра Китай çарĕсем Йçанъ хули тавринче (Шаньдун провинцин кăнтăр пайĕ) йапонĕçсене халĕ те хĕссе пыраççĕ. Вĕсем Йçанъ хули çине висĕ йенчен наступлени туса пыраççĕ. Çав хулара йапонĕçсем вунă пин çынна йахăн тăраççĕ. Вĕсем, хăйсем патне çĕнĕрен çарсем илсе пырассине шанса, Китай çарĕсене хирĕç тăраççĕ.

Йапони çарĕсен 10-мĕш дивизин командуйушчине Исогаи, генерал-лейтенанта Шаньдун провинцин кăнтăр пайĕнче пулнă çапăçусенче вĕлернĕ.

Шаньдун провинцин çурçĕр пайĕнче Китай партизанĕсем Йуйчене (Цзинаньрен çурçĕрпе хĕвеланăçĕнеле) тытса илнĕ.

Пысăк подкреплениссем пырса çитнĕ хыççăн йапонĕçсем Китай çарĕсене Цзинань патĕнчен (Шаньдун провинцин столици) хĕссе каларнă. Цзинаньре йапонĕçсем массăлă арĕссем тăваççĕ. 400 çынна арĕсленĕ те ĕнтĕ, вĕсен пурнăçĕ çинчен нимĕн те паллă мар.

Март уйăхĕнче—çирĕм икĕ кун хушшинче Шаньси провинцинче йапонĕçсене 15 пин çынран сахал мар вĕлернĕ. Китай çарĕсем 2.300 винтовкă, 7 тупă, 5 вакун амуници, 30 грузовик, 500 лаша тата патронсем нумай туртса илнĕ.

Вăтам Китайра Шанхай районĕнче Китай партизанĕсен активлăхĕ кашни кунах ӳссе пырать. Партизансем хула патне сывхарсах пыраççĕ, вĕсем Шанхай хулине пур йенчен те хупăрласа пыраççĕ.

Апрелĕн 11-мĕшĕнче Китай самольочĕсен пĕр звени Шанхай çине пырса тапаннă. Вăл Шанхай патĕнче Йапони айеродромĕ çине бомбăсем пăрахнă. Айеродром çунса кайнă.

Уху районĕнче Китай çарĕсем ăнăçлăн контрнаступлени туса пыраççĕ. Висĕ кун вăрçнă хыççăн Китай чаçĕсем Уху хулин хĕвелтухăç йенчи хапхисене йышăнса илнĕ. Çуаньчен хулине те (Ухуран кăнтăр йенче) Китай çарĕсем хупăрласа илнĕ.

(ТАСС).

Стахановĕçсене ответлă вырăнсене куçараççĕ

ÇĔМĔРЛЕ. Йулашки вăхăтра „Большевик" савăтра стахановĕçсен йышĕ чылай ӳсрĕ. Нумайăшĕ вĕсенчен хальхи вăхăтра ответлă вырăнсенче ĕçлеççĕ. Акă, савăтра чылай вăхăт хушши çменă маçтăрĕ пулса ĕçленĕ Алексей Тугащĕв йулташ хальхи вăхăтра Хатĕрлев кантурĕн управляйущчи пулса ĕçлет. Пропагандисра, кайарахпа партком çекретарĕ пулнă В. Феклистăв йулташ механизацилĕ вăрман пункчĕн директăрĕ, слесăр пулнă Самойленко йулташ механически цех начальникĕ, Тараканăв слесăр çменă маçтăрĕ пулса ĕçлеççĕ.

Çĕнĕ ĕçе лартнă стахановĕçсем хăйсен ĕçĕнче лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем рабочисене хăйсен опычĕсемпе паллаштараççĕ.

Иваницкий.

Инкубатăрлă станцисем ĕçе тытăнчĕç

Чăваш республикĕнче чăх чĕпписене кăларакан инкубатăрлă станцисем пĕтĕмпе пилĕк (Канашра, Вăрнарта, Вăрмарта, Çĕрпӳре, Патăрйелĕнче). Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ палăртнă тăрăх, кăçалхи çул çав инкубатăрлă станцисен пĕтĕмпе 101.000 чĕпĕ кăлармала. Вĕсенчен ăратлă чĕпĕсем 40.000. Ăратлă чĕпĕсене кăлармашкăн ăмартасене Мордва республикĕнчи Сараст совхозĕнчен илсе килнĕ.

Инкупаци ĕçĕ апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçланса ийунĕн 10-мĕшне çитиччен пырать. Апрелĕн 21-мĕшĕнче малтанхи хут чăх чĕпписем тухмала. Ăратлă чăх чĕппин хакĕ 1 тенкĕ те 50 пус пулать.

Кăçалхи çул республикăри колхозсем 40.100 чăх чĕппи илесçĕ, унсăр пуçне уйрăм колхозниксене 60.000 чĕпĕ сутаççĕ.

Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ иртнĕ çулхи декабĕр уйăхĕнче инкубатăрлă станцисенче ĕçлекенсене хатĕрлес тĕлĕшпе курс туса ирттерчĕ, курсран 21 çын вĕренсе тухрĕç. Халь Канашра чăх чĕпписене пăхакансене хатĕрлекен курс уçнă, унта пĕтĕмпе 30 хĕрарăм вĕренет.

Çитĕннисем вĕренеççĕ

ЙĔТĔРНЕ. Алексейĕвкă йалĕнче хут пĕлменнисемпе сахал пĕлекенсем 20 çынччĕ. Вĕсене кăçал февраль уйăхĕнче вĕрентме тытăннă. Вĕренекенсем шкула йĕркеллĕ çӳреççĕ.

Суйлав тĕлне пурте хут пĕлекен пулассишĕн тăрăшаççĕ.

Мих. Моиçейĕв.

Çĕнĕ кино-журнал

Хроникăлă-документлă фильмсен Шупашкарти студийĕ апрел уйăхĕшĕн 3-мĕш № кино-журнал ӳкерсе пĕтернĕ. Кино-журнала режиççор Б. Вейлад йертсе пынипе Б. Тимкинпа В. Гласс оператăрсем ӳкернĕ.

Екран çинче епĕр Вăрнар МТС трактăрсене йусаса пĕтернине, Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи рабочисем РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйламали Положенине вĕреннине, чукунçул строитĕлствинче 1-мĕш участкăра лини хывнине, Канашри йалхуçалăх механизаци шкулĕ республика валли çĕнĕ кадрсем—трактăриссем, комбайнерсем, механиксем, шофĕрсем—332 çын вĕрентсе хатĕрленине т. ыт. куратпăр.

Журнал екрансем çине апрелĕн 18-мĕшĕнче тухать.

Республикăлă Испанин флочĕ путарнă крейсăр „Балеарес",—вăл пăлхавçăсен чи пысăк çар карапĕ пулнă. Ӳкерчĕк çинче карап сиксе кайнине кăтартнă. (Сойузфото).

БУФЕТСЕМ, КИОСКĂСЕМ ТАТА ЫТТИ ТЕ

Часах ĕнтĕ çурхи хĕвел хĕртсех пĕçертме тытăнать. Çакăн пек чухне вара час-часах шыв, квас ĕçес килекен пулать. Вара ыйту тухса тăрать:

— Квас ăçта тупса ĕçмеле?

Чебторг кашни çулах киосксем, буфетсем уçать. Кăçал та сăрапа квас сутакан киосксем 26 çĕрте: плошчĕдре, пахчасенче, Атăл хĕрринче буфетсем уçма палăртнă. Вăл буфетсемпе киосксем иртнĕ çулхисемех. Апла пулсан, вăл йеппе урăхла ыйту пулмала.

— Ăçта çĕнĕрен уçăлакан буфетсем тата киосксем?

Вăхăтлă ыйту ку. Шупашкарти Карл Маркс урамĕ — хулан тĕп урамĕ. Вăл урампа, ытти урамсемпе танлаштарсан, халăх нумай çӳрет. Вăл урамăн ту вĕçĕнчен Хĕрлĕ плошчĕте çити сахалтан икĕ километр пулать. Чебторг çак икĕ километр хушшинче пĕртен-пĕр киоск— Володарский урамĕнче уçса парать. Çак киоск патĕнче, иртнĕ çулхи пек, йаланах вăрăм черет пулать. Хĕрлĕ плошчĕтре те сăра, квас сутакан киосксем çителĕксĕр. Иртнĕ çулта унта ĕçмели шывсене икĕ киоскра кăна сутрĕç. Атăл хĕрне кайнă çĕрте тепĕр киоск—Канаш урамĕнче уçса параççĕ. Тăвату киоск! Тепĕр икĕ киоск Атăл хĕрринче пулать.

Ку киосксем кирлĕ таран ĕçмели шывсем тăратма пултараймаççĕ. Çитменне тата вăл киосксем умĕнче халăх нумай хушă черетре кĕтсе тăрса вăхăта усăсăр ирттерет.

Çавăнпа Чебторгăн ку вырăнсенче çĕнĕ киосксем ытларах уçса, вăл киосксем умĕнче нимĕйле черет те пулмала мар тăвас пулать.

Çанталăк ăшăтрĕ. Ку вăхăта киосксем ĕçлеме пуçламала та ĕнтĕ. Чебторг васкамасть-ха. Хăш-пĕр киоскасене йусама та тытăнмасăпа пĕрех. Чылай киосксене шал йенчен нимĕн йусамасăр, илем кĕртмесĕр, тул йенчен кăна çийелтен сăрлаттарса çӳреме пуçланă. Буфетсем патне пырса та тĕкĕнмен-ха, йусавсăр. Шал йенĕсенчен штукатурă туни йăлтах ишĕле-ишĕле пĕтнĕ.

Бакалей киоскĕсем пирки те çакнах каламала. Вăл киосксене уçма вăхăт çитрĕ. Вĕсем пур, темшĕн киосксене йусама тытăнасшăн мар.

Иртнĕ çулсенче тата кукăльсем, булкăсем, махоркă, спичкă тата ытти вак таварсене алăра урам тăрăх сутса çӳренине астăватпăр. Хĕллехи вăхăтра та вĕсем тухкаласа кĕреччĕç. Халĕ пачах курăнми пулчĕç, Чебторг ку йĕркене йăлтах пĕтерсе хучĕ. Апла тăвас мар йна, вăл латăшниксене тепĕр хут халех организацилесчĕ.

Пирĕн вĕри кукăль çийес килет. Махоркă илсе туртасчĕ. Иртсе çӳренĕ чухне чарăнса квас тата ытти тутлă шывсем ĕçесчĕ, шăрăх çанталăкра морожĕннăй илсе ĕмсе пырасчĕ.

Апла-тăк Чебторгăн вăхăта пĕртте тăсмасăр, халех урамсенче, буфетсенче культурăлă суту-илӳ тума тытăнмала.

Ив. Моçейĕв.

Трак районĕнче

★ **Колхоза кĕреççĕ.** Çураки çывхарнă май, районри нумай йалсенче йединоличниксем колхоза кĕресси сарăлса пырать. Акă, Уйкас Йунтапа йалсоветĕнчи „Çĕнĕ пурнăç" колхоза 6 хуçалăх, Каганович йачĕпе тăракан колхоза 2 хуçалăх кĕчĕç. Çавăн пекех Спасăв йачĕпе тăракан колхоза çĕнĕрен икĕ хуçалăх кĕнĕ.

★ **Районри колхоз шкулĕ.** Трак районĕнче халиччен районри колхоз шкулĕ пулман. Кăçал колхозсем валли кирлĕ кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе районри колхоз шкулĕ уçăлчĕ. Унта икĕ уйрăмра уйхир бригадирĕсем тата счетоводсем пулма пурĕ 45 çын вĕренеççĕ.

★ **Çĕнĕ трактăриссем.** Трак МТС çумĕнчи трактăриссен 4 уйăхлă курсĕнчен 45 трактăрис вĕренсе тухрĕç. Вĕсенчен 4-шĕ хĕрарăмсем.

★ **Махоркă лартса тăвасси.** Райçĕрĕç пайĕ çумĕнче махоркă лартса тума вĕрентмели 3 кунлăх курс пулса иртрĕ. Унта пурĕ 22 çын вĕренчĕç.

★ **Хăй тĕллĕн вĕренсе трактăриса тухрĕ.** Трак йалсоветĕнчи Сталин йачĕпе тăракан колхоз членĕ Григорий Новоçелăв килĕнче хăй тĕллĕн трактăр ĕçне вĕреннĕ. Вăл апрелĕн 7-мĕшĕнче МТС-ра екзамĕн тытса, 2-мĕш категорилĕ трактăрист йатне илчĕ.

★ **Шавлă оркестр.** Çавалçырма йалсоветĕнче „Стрела" аласталăх ертелĕ çумĕнче С. Алексейĕв й. шавлă оркестр организациленĕ. Халĕ оркестр майăн 1-мĕшне хатĕрленсе çĕнĕ ташăсемпе йурă кĕввисем вĕренет. Оркестрта пурĕ 16 çын.

М. Çпиридонăв художникăн выставки

Чăваш совет художникĕсен сойузĕ йулашки кунсенче М. С. Çпиридонăв художникĕн пултарулăхне пăхса тухас тĕлĕшпе пысăк выставкă туса ирттерчĕ. Мĕн уçăлнăранпах выставкăна студентсем, рабочисем тата служăшчисем ушкăнĕ-ушкăнĕпе пырса курчĕç.

Выставкă хупăннă май, апрелĕн 12-мĕшĕнче, художник пултарулăхне тишкĕрсе тухма йатарласа пуху пуçтарăнчĕ. Пухăва пынисем хушшинче художниксем, писатĕлсем, артиссем, студентсем, рабочисем служăшчисем, т. ыт. те пулчĕç.

Мĕн курма пулать-ха Çпиридонăв художникĕн йулашки выставкинче? Пирĕн умра художникĕн çирĕм çул хушшинче ӳкернĕ картинисемпе етӳчĕсем, пейзажĕсемпе портречĕсем.

Акă, епĕр каллех асран кайми „Шăпăрçă" умĕнчен чылайччен уйăрăлса кайма пĕлместпĕр, „Шăпăрçă" картинăна çырни 12 çул иртнĕ пулин те, ăна пысăк маçтăрлăхпа çырнине асăрхамасăр иртме çук. Кунтах тата ытти картинăсене те иртнĕ çулсенчи выставкăсем тăрăх палласа илме пулать. Акă, кăвак сухаллă пĕр старик пăхăр чĕлĕмне туртса ларать. Унăн ĕçпе пиçсе хытнă аллисем тăрăх мăнтăр йун тымаррисем тапса тăраççĕ. Таса пир кĕпи çинче ордĕн йăлтăртатса тăрать. Камне каламасан та ăнланать пуль вулакан, калаçу Çтепанăв орденоносец портречĕ пирки пырать. Çав тери пысăк йуратупа ӳкернĕ ăна Çпиридонăв.

Унпа йунашар тата республикăн паллă хĕрĕ—Кçени Григорйĕвă йулташ портречĕпе Н. И. Шелепи портречĕсем.

Ытти хăшпĕр картинисене илсе пăхсан та, художникĕн маçтăрлăхĕпе пултарулăхĕ ӳссе пынине аван курма пултаратпăр. Анчах çак вăрăм çула художник пĕр такăнмасăрах утса тухрĕ тесен, епĕр пысăк йăнăш тунă пулăттăмăр. Автăр социалисăмлă реалисăм метăдне час ăнланса илеймен пулнă. Астăватпăр Çпиридонăв „Чăваш хĕрĕ" (халĕ ăна "Девушка в тухье" йат панă) йатлă картинине. Мĕнле хĕр вăл? Ĕçпе тар йухтарса ӳснĕ чăваш хĕрĕ мар пулĕçке?.. Çук, пĕтĕмпех урăх хĕр—кулак хĕрĕ тейĕн ун çине пăхсан. Йе тата „Колхоз лашине тасатни" картинăна илер. Кунта художникĕн тĕп тĕллевĕ лаша çине илсе пырать, ăна тасатакан çыннине коньух теме май çук. Вăл картинă тăрăх художникĕн шухăшне те пĕлме хĕн.

Мĕн çитмест Çпиридонăв художник пултарулăхĕнче? Пухура тухса калаçакансенчен чылайĕшĕ çак ыйту çине тӳрĕ ответсем пачĕç.

Çав сăмахсене пĕтĕçтерсе каласан çакăн пек вывăдсем тума пулать.

Художник хăйне килĕшнĕ йапаласене хальхи тапхăр виçипе виçмесĕрех ӳкерсе хурать. Çавăн пирки йех ĕнтĕ унăн картинĕсенче деталсем йе пытанса йулаççĕ, йе тĕллĕн-тĕллĕн ытлашши те пулса тăраççĕ. Ененмелерех тухтăр тесе, художник пĕр тип çумне „пулăшакан" типсене чыхлантарма тăрăшать („Кçени Григорйĕвă" портретĕнчи ним çинчен каламан ĕнесем, „Шăпăрçăри" Атăл çыранĕсем т. ыт. те).

Хăйĕн картинисенчен чылайĕшне художник сĕнӳсем тăрăх ӳкернĕ теме пулать. Çав хушăрах художникĕн творчĕствăла шухăшĕ палăрманпа пĕрех. Художник каларĕш, вăл хăй пуçĕпе ним те шутласа кăларман, куçа курăннисене çеç çырса илнĕ, пулать.

Чылай пысăк картинăсенче илемлĕх (художĕствă) елеменчĕсем вырăнне очеркисăм елеменчĕсем мала тухса тăни палăрать („Бетонщчиксен бригади", „Илйинкăри канмали çурт", „Çĕмĕрле комбиначĕ" т. ыт. те). Кунта каллех художник хăй ĕçне тăрса туманни, васкаса ĕçлени палăрать.

Пĕтĕмĕшпе илсен, тухса калаçнă йулташсем пурте Çпиридонăв художнике çителĕклĕ хак хурса, унтан мĕн ыйтма тивĕçлине ыйтрĕç, мĕн сĕнме кирлине сĕнчĕç.

Çакăн пек творчĕствă выставкисене малашне те туса ирттерес пулать. Уйрăмах çамрăк художниксен выставкисене хак хуни кирлĕ.

Мих. Ижейĕв.

„Епĕр пирĕншĕн аслă тăван çĕршыв тăнине пĕлнĕ"

Çак кунсенче Йапони тыткăнĕнчен таврăннă „Кузнецкстрой" пăрахутăн командинчен çыру илнĕ. Вăл çырура çапла каласа çырнă:

„Йапонĕçсем пире хăйсен шпионĕсем туса хурас тесе пур майсемпе те хăтланчĕç. Пире кашнинех Йапонире йе Манчжоу-Гора йулатăр,—тесе сĕнӳсем пачĕç".

Йапонĕçсем командă членĕсене шпионла ыйтусем параççĕ. Пуринчен ытла вĕсем Камчаткăри тата Приморйери лару-тăрупа, Çурçĕр Тинĕс çулĕпе хыттăн интересленчĕç. Орденоносец Куçмин матроса, ыйтса тĕпченĕ тата ытти çамрăк морйаксене сутăнчăкла ĕçшĕн йапонĕçсем вĕсене укçа, ерех тата альбомсемпе сăн ӳкерчĕкĕсем суйласа илме сĕннĕ.

„Пăрахут çинчи пĕтĕм командăпа пассажирсем,—тенĕ çырура—Йапони тыткăнĕнче хăйсене совет патриочĕсем пек çирĕп тытрĕç. Епĕр нимĕнле провокацисем хыççăн та каймарăмăр.

Йапонĕçсем нимĕн те тума пултараймарĕç. Пирĕн хысăмăрта хăватлă та аслă тăван çĕршыв тăнине епĕр пурте пĕлсе тăнă, пирĕн правитĕлствă, пирĕн тăван Сталин пирĕншĕн тăрăшнине епĕр пĕлсе тăнă, çавăнпа та епĕр шиксĕр пулнă.

Епĕр пурте, пĕр çын пекех, хамăрăн йуратнă тăван çĕршыва сыхлама хатĕр, пĕтĕм совет халăхĕ пекех, алхасса кайнă Йапони империалисĕсене отпор пама хатĕр".

(ТАСС).

Суту-илӳ хыпарĕсем

✪ Чебторг магазинĕсем май уйăхĕ умĕнхи суту-илӳве хатĕрленеççĕ. Горькинчен малтанхи пăрахутпа калушсем 50 пин тенкĕлĕх, туфлисемпе ботинкăсем—110 пин тенкĕлĕх, ачасемпе хĕрарăмсене валли чулхасем—16 пин тенкĕлĕх, трикотаж: фуфайкăсем, çыхнă кĕпесем, перчаткăсем, накиткăсем тата ытти çийе тăхăнмали тумтирсем — 30 пин тенкĕлĕх, çăмрап çыхса тунă пуç тутрисем—6 пин тенкĕлĕх, ача-пăчасем валли выльăмали йапаласем—35 пин тенкĕлĕх, радио таварĕсем 5 пин тенкĕлĕх, галантерейă таварĕсем 50 пин тенкĕлĕх кӳрсе килеççĕ.

Тата халĕ Шупашкар магазинĕсене тиĕ çу, тĕрлĕрен конфетсем нумай кӳрсе килнĕ.

✪ Пекарнăсенче уйава хатĕрленсе ачасем валли уйрăмăн йатарласах булкă, пĕлушкă тата ытти тĕрлĕрен çимĕçсем пĕçерсе хатĕрлеççĕ. Çакăн пекех хулара тĕрлĕрен фруктăсем; апелсин, лимон сутассине вăйлатаççĕ.

✪ Май уйăхĕн малтанхи кунĕсенче Шупашкарти Чувашскайа урамри 26 хваттерлĕ çуртăн айалти хутĕнче тата Коммуналлă слободара çĕнĕрен магазин уçаççĕ.

✪ Апрелĕн 20-мĕшĕнчен Шупашкар хулин урамĕсенче сăра, квас, тутлă шывсем сутмали 26 киоск ĕçлеме пуçлать. Халĕ чылай урамсенче киосксене йусаса сăрласа, илемлетсе хатĕрлеççĕ.

Тĕрĕсленсе килнĕ заметкăсем тăрăх

◆ Пирĕн редакцине Йетĕрне районĕнчен „**Жалăбăсем çине бӳрократла пăхаççĕ**" йатлă заметкă килнĕччĕ. Заметкăна тĕрĕслесе тухнă хыççăн, ПСК(б)П Йетĕрне райкомĕ çапла пĕлтерчĕ:

1937 çулхи февраль уйăхĕнчен пуçласа районти прокуратурă—27, райçĕрĕç пайĕ 29, райĕçтăвком 16 жалăбă илнĕ. Прокуратурă 14 жалăбăна тĕрĕслесе тухнă, виççĕшне тĕрĕслеме милици тытăмне панă, 4 жалăбăна çухатнă, ыттисем хускалусăр выртаççĕ. Райçĕрĕç пайĕ 15 жалăбăна, райĕçтăвком 4 жалăбăна тĕрĕслеме тытăнман.

Жалăбăсене пăхса тухса ĕççынисене вăхăтра ответ паманшăн ПСК(б)П Йетĕрне райкомĕ Миславский йулташа (прокуратурă) асăрхаттарнă, малашне жалăбăсене вăхăтра, правитĕлствă кăтартнă срукра, пăхса тухма хушнă.

Çавăнпа пĕрлех ПСК(б)П райкомĕ райĕçтăвкома, райçĕрĕç пайне тата ытти учреждепесене те пĕтĕм жалăбăсене 5 кун хушшинче пăхса тухса, ĕççынисене таткăллă ответ пама хушнă.

ХРОНИКĂ

* * Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Анатолий Федăрăвич Кошечкин йулташа Чăваш АССР Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕн замеçтитĕлне лартнă. Çав вăхăтрах Кошечкин йулташа республикăри аслă госсанинçпектăр ĕçĕсене туса пыма хушнă.

* * Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Йемелйан Николайĕвич Николайĕв йулташа Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ замеçтитĕлĕнчен тата Тĕштырă управлени начальникĕнчен хăтарнă.

* * Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Иван Йевдокимăвич Свĕшникăв йулташа Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн замеçтитĕлне тата Тĕштырă управлени начальникне лартнă.

* * Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Вадим Петрович Чернов йулташа Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн пĕррремĕш заместитĕлне лартнă.

* * Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Николай Иванович Серебренникăв йулташа Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ замеçтитĕлĕнчен хăтарнă.

Мăшкăланăшăн

Апрелĕн 3-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи халăх сучĕ Пикшик йалĕнчи колхоз председателĕ пулнă И. Ваçилйĕвпа Пикшикри аластаlăх ертел председателĕ пулнă С. Трофимăв ĕçне уçă ларура пăхса тухрĕ. Декаберĕн 13-мĕшĕнче И. Ваçилйĕвпа С. Трофимăв Çатра-Хучахматра В. Кошкин патĕнче йатарласах С. йатлă хĕрачана ерех ĕçтерсе ӳсĕртнĕ те, унтан мăшкăланă. Çак ирсĕр мăшкăллă ĕçе тунăшăн суд И. Ваçилйĕвпа С. Трофимăва 5 çул тĕрмене хупса усрамала турĕ.

Й. Романăвă.

Атăл çинче

Ĕнер, апрелĕн 16-мĕшĕнче, Шупашкар тĕлĕнче Атăл урлă каçарма пуçларĕç. Çурран çынсене тата лавсене Атăл урлă каçарнă çĕрте кăçал икĕ паром ĕçлемеле.

Атăлăн лешйенче хальхи вăхăтра перевоз пристăнне тĕпренех йусаççĕ.

Атăл пăртан тасалса пĕтет. Шыв пĕтĕмпе апрелĕн 16-мĕшне 569 сантиметр хутшăннă. Апрелĕн 15-мĕшĕнче 9 сантиметр, апрелĕн 16-мĕшĕнче 10 сантиметр тулнă.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Чăвашпромсойуза кирлĕ:

1. Бухгалтĕр-ревизор
2. Материаллă пайра ĕçлеме бухгалтĕр
3. Картотетчик
4. Çекретарь—стенографисткă
5. Оргинструктăр.

Çак адрĕспе пымала: Шупашкар хули, Театральнăй урам, 3. Телефон №-0—44.

2—1

КОГИЗ-ăн Чăваш республикĕнчи уйрăмĕ

КОГИЗ-ăн Шупашкарти, Йетĕрнери, Канашри, Çĕмĕрлери, Улатăрти, Патăрйелĕнчи, Çĕрпӳри, Сĕнтĕрвăрринчи тата Куславккари магазинĕсене

„Партин йертсе пыракан органĕсен суйлавĕсене ирттерессн çинчен"

йатлă пĕчĕк кĕнеке килни çинчен пĕлтерет.

Кĕнекере—ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ 1938 çулхи мартăн 29-мĕшĕнче йышăннă постановлени тата Партин йертсе пыракан органĕсене суйламали инструкци пур.

Кĕнеке хакĕ 5 пус.

КОГИЗ-ăн Чăваш республикĕнчи кантурĕ.

Академи театрĕнче

Апрелĕн 17-мĕшĕнче

Премйерă

Вырăсла спектакль

РАХМАНĂВ.

"ПРОФЕССОР ПОЛЕЖАЕВ"

(Беспокойная старость)

Режиççор С. С. МАРТАГИН лартать.

Художник И. Н. САПОЖНИКĂВ.

Талон №169 Абонимент №5 талон №16

Анонс! Л. Н. ТОЛСТОЙ

АННА КАРЕНИНА

Лартма хатĕрленеççĕ.

Çĕмĕрлери райпромкомбината

ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ КИРЛĔ:

Аслă бухгалтĕр 1.

Инженер-механик 1

Плановик-економист 1.

Хватер пур, Ĕçукçи килĕшӳ тăрăх.

3—2 Дирекци.

„Чăваш Коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене каялла памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 197. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста, Заказ № 301. П. 6, 85—94 см. 1—1, н: н